теле 9-10 стр. программа ТВ

# УРАМА ÇАРРАН ЧУПАКАН АННЕ

8-мĕш стр.



**Каснă-лартнă Анна-свинарка**

ШупашкART 6-мĕш стр.

www.tavan-en.cap.ru

шупашкар Тăван Ен

Хакĕ ирĕклĕ

21 № 41-42 (9948-9949) ИЮНЬ 3-9, 2011 ЭРНЕКУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă




РЕСПУБЛИКĂРА

## Республика предприятийĕсене пулăшмалла

Регионăн экономика аталанăвĕн министерствин промышленноç комплексĕн модернизацийĕпе инноваци технологийĕсене пурнăçа кĕртес ыйтупа йĕркеленĕ анлă ларура Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Олег Макаров республикăри организацисен экономика тулашĕнчи ĕçĕ-хĕлĕ пирки доклад тунă. Пĕлĕр суту-илӳ тулашĕнчи укçа-тенкĕ çаврăнăшĕ регионра 281 миллион долларпа танлашнă. Ку вăл 2009 çулпа танлаштарсан 56 миллион доллар сахалрах. Импорт 21 %, экспорт – 14% чакнă. 2010 çулта суту-илӳпе республика 76 çĕршывпа ĕçленĕ. Чикĕ леш енне ăсатнă таварсем хушшинче машиностроени малти вырăнта, ун хыççăн – хими промышленноçĕ.

## Парăмçăсен тĕрĕслевĕ

ЧР Пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министерстви патшалăх унитари предприятийĕсен кредит парăмĕсене чакарас тата пĕтерес тĕллевпе банксен умĕнчи 26 организацин кĕске вăхăтлăх тата вăрăм хушăлăх тивĕçĕсен мониторингне ирттернĕ. Унăн пĕтĕмлетĕвĕ кăçалхи май уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне унитари предприятийĕсен кредит парăмĕсем 774 356 пин тенке çитни паллă. Çав шутран 142 293 пин тенкĕ – вăхăтра татман тӳлевсем.

Вăхăтра татман парăмсен пысăк тӳпи чăваш строяминĕн «Чăвашавтотрансне» тивет – 112 981 пин тенкĕ – тĕрĕсленĕ предприятисен пĕтĕмĕшле парăмĕсен 79,4%.

## Чи лайăх класс ертӳçине палăртнă

«Вĕрентӳ» наци проектне пурнăçа кĕртсе республикăра VI «Чи лайăх класс ертӳçи» конкурс иртнĕ. Мероприятие пурĕ 2800 класс ертӳçи хутшăннă. Ку вăл – Чăваш Енри пĕтĕм класс ертӳçисен 46 %. Жюри членĕсем Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Елчĕк, шупашкар районĕсен тата Çĕмĕрле хулин педагогĕсем уйрăмах хастарлăх кăтартнине палăртнă.

Республика шайĕнчи конкурс икĕ тапхăрпа иртнĕ. Куçăн мар турта 70 ытла конкурсант тупăшăва класпа ĕçлемелли программăна тăратнă. Финалта 24 педагог çакна кăтартма презентаци хатĕрленĕ. Аслă звено ертӳçисен хушшинче Канаш хулинчи ĕçтешĕ хыççăн Ишекри вăтам шкул вĕрентекенĕ Ольга Александровна Полякова иккĕмĕш вырăна тухнă.

ЧИТАЙТЕ В СВЕЖЕМ НОМЕРЕ ГАЗЕТЫ Причебоксарье

**Наркотиков – нет?**

● Наркомансен юратнă чечекне ял пуçлăхĕсен пĕтермеллех...

**Мусор полезен огороду.**

● Пахчашăн çӳп-çап та усăллă

УЯВ

# Паянхи çемьен шанчăклă тĕревĕ...

## ...патшалăх пулăшăвĕнче. Хăйне юрăхлă ывăл-хĕр çитĕнтерессишĕн вăл май килнине пĕтĕмпех тăвать

Ачалăха сыхлас, пысăк йышлă çемьесене пулăшу парас тĕллĕшĕпе патшалăх политики юлашки çулсенче питĕ сулмакалă утăмсем турĕ. Пасар саманин çирĕп тĕрĕслевне тивĕçлĕн тӳссе ирттерекен кил-йышсенче – ыранхи кун шанчăкĕ. Вĕсенче çитĕнекен ывăл-хĕрсем вара патшалăх хӳттинче. Çак кунсенче районта çĕр сертификачĕн телейлĕ чи пĕрремĕш хуçисене чысларĕç.



В. Вышинская фото ӳкерчĕкĕ

Янăшра пурăнакан Родионовсем хăйсен умне çакăн пек телей йăтăнса анасса шухăшлама та пултарайман. Пĕрре пăхсан ыттисенчен нимпе те уйрăлса тăмасть тейĕн ку çемье, çав вăхăтрах тăрăшулăхĕпе пултарулăхне кура ял çинче вĕсем чи хисеплĕ çемьесен йышĕнче. Петр Семеновичпа Оксана Павловнăн тăватă ача çитĕнет. Ксения, Анжела тата Александрпа Сергей йĕкĕрешсем ялти вăтам шкулта вĕренеççĕ. Хушма хуçалăха аталантарас енĕпе тăрăшать çемье. Кĕтĕве ăсатиччен кил хуçи мăшăрĕ виçĕ ĕнене сума ĕлкĕрет. Район, ял тăрăх территорине тирпей-илем кӳртес тĕлĕшĕпе те хастар вĕсем. Сертификата алла илнĕ самантран хăйсен пурлăхне куçнă пин те икçĕр тăваткал метр лаптăкпа çурт-йĕр çавăрма усă курасшăн. «Пирĕн кил-йышшăн та, нумай ачаллă ытти çемьесемшĕн те, паллăх, ку питĕ пысăк пулăшу», – тет çемье пуçĕ.

Йышлă çемьесене пулăшу парас тĕллевпе районта калама çук пысăк ĕç туса ирттереççĕ. Çĕнĕ ача сачĕ çĕкленет, кашни çулах хушма ушкăнсем уçăлаççĕ, садике кайма вăхăт çитнĕ 1,5-3 çулсенчи ачасен ашшĕ-амăшне укçа-тенкĕ тӳлес программа ăнăçлă ĕçлет т.ыт.те. «Ачасен аталанăвĕшĕн, пурнăçра вĕсене хăйсен вырăнне тупма пулăшассишĕн çакă пĕтĕмпех пĕлтерĕшлĕ», – терĕ Шупашкар район администраци пуçлăхĕ Виктор Михайлов савăнăçлă мероприятире.

Амăшĕсемпе ачалăха хӳтĕлес тĕлĕшĕнчи курăмлă тепĕр утăм – нумай ачаллă çемьесене пулăшас тĕллевпе каялла тавăрса памалла мар çĕр лаптăкĕ уйăрасси çинчен калакан республика законĕ пулчĕ. Районта çак кунтан пурнăçланма пуçларĕ те ĕнтĕ ку программа. Ашшĕ-амăшĕсĕр çитĕнекен ачасене çемье ăшшине тупма пулăшнă кил-йышсене Виктор Изосимович уйрăммăн тав турĕ.

ЧР Конкурентлă политика тата тарифсен патшалăх службин ертӳçи Альбина Егорова савăнăçлă мероприяие пухăннисене çитĕннисем, ашшĕ-амăшĕ кашни ачашăн яваплине, кашнинех тимлĕхпе, юратупа çупăрласси пĕлтерĕшлине аса илтерчĕ. «Ачасене пĕлӳ илме – шкулчченхи учрежденисенче те, вĕренӳ заведенийĕсенче те, пур енлĕ аталанма май пултăр тесе паян тăрăшмалла. Çак тĕллевпех çĕнĕ шкулсем çĕкленеççĕ, физкультурăпа спорт комплексĕсем уçăлаççĕ...», – терĕ ведомство ертӳçи пĕрремĕш сертификат хуçисене Чăваш Республикин Президенчĕ ячĕпе саламланă май.

Çĕр лаптăкне кĕтекенсен черетĕнче тата 26 çемье, çак тĕллевпе уйăракан çĕрсене палăртнă май сертификатсем хăйсен хуçисене тупĕç.

Савăнăçлă мероприятисем малалла РФ Пенси фончĕн Шупашкар районĕнчи управленийĕн акт залĕнче тăсăлчĕç. Амăшĕн капиталĕн 9 сертификатне валеçрĕç кунта. Иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачасемшĕн уйăракан укçа-тенке илме закон вăя кĕнĕ 2007 çултанпа РФ Пенси фончĕн районти уйрăмĕ 1423 заявлени йышăннă, вĕсем тăрăх 1380 сертификат амăшĕсем патне çитнĕ. Кăçал – 125 ыйтса çырни тăрăх 123 документ валеçнĕ.

**ВИКТОРИЯ ВЫШИНСКАЯ**




«ТЕ» çак номерне **2217** çемье çырăнса илет, **249** çемье туянса вулать

## Аякра вырнаçнă ялсенче те пирĕн хаçата çырăнса илме пулать

2001 çулхи 2-мĕш çур çулти çырăнтару хакĕсем. Тенкĕ.

| | Тăван Ен (индекс) | | Причебоксарье (индекс) | |
|---|---|---|---|---|
| **Почта уйрăмĕсенче** Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисенче, Шупашкар районĕнче çырăнтараççĕ | | 186,78 | | 156,36 |
| **«Чăвашпичет» киоскĕсенче** Республикăн «Чăвашпичет» киоскĕсем вырнаçнă райцентрĕсемпе ялсенче, саласенче çырăнтараççĕ | | 150,00 | | 135,00 |
| **Редакцин альтернатива çырăнтарăвĕ** Вырăна çитерсе / Çитермесĕр | | 175,00 / 150,00 | | 160,00 / 135,00 |

Саламланă е тав тунă чухне пирĕн хаçата çырăнакансем валли çăмăллăхсем пур: **50%** йӳнĕрех

САНТАЛĂК

Chuvashia.com тата yandex.ru сайтсем пĕлтернĕ тăрăх

| | | | |
|---|---|---|---|
| эрнекун ...Июнь, 3 | +27° каç +11° | Уяр çанталăк. |
| шăматкун ...Июнь, 4 | +16° каç +12° | Пĕлĕтлĕ çанталăк. Çумăр çукалать. |
| вырсарникун ...Июнь, 5 | +16° каç +7° | Пĕлĕтлĕ çанталăк. Çумăр çăвать. |

| | | |
|---|---|---|
| Июнь, 6 | Тунти кун | +22° |
| Июнь, 7 | Ытлари кун | +21° |
| Июнь, 8 | Юн кун | +22° |
| Июнь, 9 | Кĕçнерни кун | +24° |

**валюта курсĕ** Июнь 2-мĕшĕ

$ 27,95

€ 40,20

# Кун йĕркинче

УЯВ САЛАМĔСЕМ



**Виктор МИХАЙЛОВ,** Шупашкар район администраци пуçлăхĕ

## Хисеплĕ ентешĕмĕрсем, район ĕçченĕсем!

Сире пурне те Ĕçпе юрă тата спорт уявĕпе чĕререн саламлатпăр.

Районти мĕнпур ял ĕçченĕсене çурхи ĕçсене вăхăтра тата пахалăхпа вĕçлеме вăй-хал çитернишĕн чĕререн тав тăватпăр. Эсир тăрăшса ĕçленипех район çулсерен ăнăçупа çитĕнӳ çулĕпе çирĕппĕн утать. Малашне те хăвăр суйласа илнĕ юратнă ĕçре татах та тăрăшса ĕçлессе шанас килет.

Хĕрӳ ĕçсен пĕрремĕш тапхăрĕ вĕçленчĕ. Умра – иккĕмĕш тапхăр. Акса-лартса хăварнă тырпулпа пахчаçимĕçе çитĕнтерес тата тăкаксăр пухса илес ĕçре те хастар пуласса çирĕп шанса тăратпăр, кулленхи ĕçре çирĕп вăй-хал, иксĕлми хавхалану сунатпăр.

Тăрăшса ĕçлерĕмĕр – канăва та тивĕç, пĕрле савăнар.

Уяв ячĕпе кашни çемьене тăнăç пурнăç, килĕшӳпе ăнланулăх, иксĕлми телей сунатпăр.

Уяв ячĕпе, ентешĕмĕрсем!

## Районти социаллă пулăшăвăн хисеплĕ ĕçченĕсем тата çак ĕçре вăй хунă ветерансем!

Сире пурне те çывхарса килекен професси уявĕпе ăшшăн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр.

Аслă ăрăва тимлĕх уйăрасси, вăл шутра вăрçăпа ĕç ветеранĕсене, тĕрлĕ сăлтава пула йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ нумай-нумай çемьене пулăшасси – пирĕн тивĕç.

Сирĕн иксĕлми ыркăмăллăхпа пултарулăха, сăпайлăхпа тавçăруллăха пула паянхи кун чылай çивĕч ыйтусене татса пама май килчĕ. Малашне те çак ĕçе татах та лайăхлатас тесе тăрăшăпăр.

Уяв ячĕпе пурне те!

Кулленхи ĕçре ăнăçупа çитĕнӳ, иксĕлми телей сунатпăр. Ырă ĕçсемшĕн тавах сире пурне те. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕрсем пурнăça кĕччĕр.



**Вячеслав РАФИНОВ,** Шупашкар район пуçлăхĕ

ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧЕ

## Инвалидсем ĕçлесшĕн

Шупашкар районĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрта инвалидсем валли пĕрлехи информаци кунĕ иртнĕ. М. В. Медебейкина инспектор-профконсультант йĕркеленĕ çак мероприятие 26 çын хутшăннă. Ĕççĕр инвалидсем ĕç рынокĕнчи юлашки хыпарсемпе паллашнă, хăй тĕллĕн ĕç вырăнĕ тăвакансене, вăхăтлăх ĕçе вырнаçакансене професси пĕлĕвĕ илме, ĕç квалификацине пысăклатма патшалăх паракан пулăшу мелĕсемпе паллаштарнă.

## Субсиди шайне çĕнĕрен шутланă

Районти халăха социаллă хӳтлĕх паракан пай 2011 çулхи май уйăхĕшĕн коммуналлă çурт-йĕрте пурăнакансем валли хваттер укçи тӳлеме субсиди панă. Ăна республика стандарчĕсемпе килĕшӳллĕн тата пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçене кура çĕнĕрен шутласа палăртнă. Субсиди илме тивĕçлĕ 330 çынна пурĕ 305, 71 пин тенкĕ тӳленĕ.

## Уйăхлăха пĕтĕмлетнĕ

ЧР Президенчĕн культура тĕлĕшĕнчи канашçи, искусствоведени докторĕ, Чăваш патшалăх гуманитари институчĕн искусствоведени кафедрин заведующийĕ Михаил Кондратьев паллă композитор Герман Лебедев çуралса ӳснĕ Салапайкассинче композитора асăнса irттернĕ уйăхлăха пĕтĕмлетме хутшăннă. Ачасен пултарулăхне вăл пысăк хак панă. Ентешĕн ятне асра тытса салапайкассисем парк уçнă. Уйăхлăхăн юлашки кунĕсене Вăрман-Çĕктерте пĕтĕмлетнĕ. Г. Лебедев пултарулăхĕпе пурнăç çулне халалланă сочиненисен конкурсĕнче Чăрăшкассинчи вăтам шкул вĕренекенĕ Людмила Ильина çĕнтернĕ.

ХĂЙ ĔÇĔНЧЕ ЧĂН ĂСТА

# Малтисем малтах пыраççĕ



## Ăмăрту, паллах, яланах ĕçе хĕм кĕртет

Шупашкар районĕнчи дояркăсемпе осесеменаторсем 30 çул ытла ĕнтĕ ăмăртăва пухăнаççĕ. Ку ырă йăла нихăш саманара та пĕтсе ларман, вăл малаллах аталанса пырать. Майăн 30-мĕшĕнче районти тĕрлĕ хуçалăхсенчен – 11 доярка, 8 осеменатор черетлĕ ăмăртăва Ленин ялĕллĕ СХПК колхозăн 1-мĕш №-лĕ ĕне фермине пухăнчĕç. Чи малтанах вĕсене, шап-шурă халат тăхăнса строя тăнăскерсене, район администраци пуçлăхĕ Виктор Михайлов саламларĕ, ăнăçу сунчĕ:

– Эсир ĕçре кашни кун паттăрлăх кăтартатăр, хăвăр тĕслĕхпе çамрăксене хавхалантаратăр, – терĕ.

Конкурсантсем малтанах теори шайĕпе анкета ыйтăвĕсем (сăмах май, вĕсем самаях кăткăс пулчĕç) çине хуравларĕç, унтан кашниййĕ ĕне сăвакан аппарата сӳтсе пуçтарас тĕлĕшпе тата унпа сĕт сăвас тĕлĕшпе хăвăртрах ĕлкĕрес тĕллевпе ăмăртрĕç.

Епле пăравур ĕçлеççĕ вĕсен аллисем! Самантрах кăткăс аппарата сӳтсе каялла пуçтарса та хураççĕ. Паллах, пурин те пĕр пек тип-тикĕс пулмасть. Аппарат йĕркеллĕ ĕçленине вакуумпа тĕрĕслесе пăхаççĕ, тепĕр чухне каялла сӳтеççĕ. Сĕт сунă вăхăтра ĕнисем тата канлĕн, пĕр хускаламасăр тăраççĕ. Акă, ĕç вĕçленчĕ, аппарата сӳтсе сĕте бидона яраççĕ. Юлашкинчен вара тĕрĕслемелле алăпа суса пăхаççĕ – сăвăнмасăр юлман-и?

Ăмăрту, паллах, яланах ĕçе хĕм кĕртет – камăн мала тухас килмĕ? Ырă ят та, парне те, пысăк ĕç укçи те – пурнăçа малалла туртать.

Осеменаторсен хăйсен ăмăрту йĕрки – медицина препарачĕсене таса тытас йĕркене пăхăнса ĕнесемпе пушмак пăрусене ăнăçлă пĕтĕлентересси. Кашни вак-тĕвек шутра, кашни хускану вырăнлă пулмалла.

Ăмăртăва хутшăнакансемпе калаçу хускататăп. Тамара Макарова (Ленин ячĕллĕ СХПК колхоз) ăмăртăва шăпа ярса чи малтан тухрĕ.

**– Миçемĕш хут хутшăнатăр çак конкурса?**

– 8-мĕш хут ĕнтĕ. Пĕлтĕр малтан «Приволжский» учхозра irттернĕ район ăмăртăвĕнче 3-мĕш вырăн йышăнтăм, унтан мана Елчĕкре иртнĕ республикăри конкурса ячĕç. 2009 çулта районти ăмăртура эпĕ 2-мĕш вырăн йышăнтăм.

**– Çăмăлах мар пуль сирĕн ĕç? Кунĕпех вăй-халпа, васкаса ĕçлемелле, ĕлкĕрмелле.**

– Йывăрри те, çăмăлли те пулать. Малтан эпĕ хулара пурăнаттăмччĕ, «Паха тĕрĕ» фабрикăра ĕçлеттĕмччĕ. Анчах хваттер илеймерĕмĕр, вара çемйипех Апаша куçса килтĕмĕр, çĕр илтĕмĕр, колхоз пире çурт лартма кивçен укçа пачĕ. Халĕ пурнăç йĕркеленсе кайрĕ. Фермăри ĕç килĕшет мана, ĕç укçине те аванах илетпĕр – 7-8 пине ларать. Пĕлтĕрхи плана эпĕ тултарнă. Пурĕ 36 пăру, 40 ĕне пăхатăп. Вĕсен кашни кунхи ӳт хушаслăхне 650 грама çитертĕм.

Маргарита Васильева та çак колхозрах ĕне сăвать. Вăл кунта 3 çул çеç ĕçлет-ха, ку конкурса пĕрремĕш хут хутшăнать.

– Эпир хамăр фермăра «Елочка» системăпа ĕçлетпĕр. Çулталăкне кашни ĕнерен 4500 кг сĕт сăватпăр. Уйăхне пĕр ĕнерен эпĕ 370 кг сăватăп.

**– Мĕншĕн хутшăнма шухăшларăрха çак конкурса?**

– Манăн та çĕнтерме вĕренес килет, вăтаммисен шутне те пулин кĕресчĕ.

**– Килте ĕне выльăх усратăн-и?**

– Ялта выльăх тытмасăр çук. Хам алăпа туса илнĕ апат-çимĕçрен пахи мĕн пултăр?

Акă, ăмăртăва хутшăнакансем пĕтĕм конкурс условийĕсене пурнăçларĕç. Жюри пĕтĕмлетӳ турĕ. Малтисем малтах пыраççĕ, каялла чакма шутламаççĕ. Пĕлтĕрхи çĕнтерӳçĕсем кăçал та пĕрремĕш вырăна тухрĕç.

«Машинăпа ĕне сăвакан маçтăрсем» номинацире – Вера Николаева («Приволжское» ФГУП учхоз), «Машинăпа ĕне сăвакан маçтăр - ветеран» номинацире – Надежда Филиппова (Ленин ячĕллĕ СХПК), «Машинăпа ĕне сăвакан çамрăк доярка» номинацире – Майя Гурьева («Ольдеевская» ЗАО АФ) çĕнтерчĕç.

«Ĕнесемпе пушмак пăрусене искусствăллă майпа пĕтĕлентерекен техник-осеменатор» номинацире – Людмила Алмазова («Приволжское» ФГУП учхоз), «ĕнесемпе пушмак пăрусене искусствăллă майпа пĕтĕлентерекен техник-осеменатор-ветеран» номинацире – Зинаида Прокопьева (Ленин ячĕллĕ СХПК) мала тухрĕç.

Конкурса хутшăнакансем пурте уйрăм парнесене тивĕçрĕç.

ЛЮДМИЛА САЧКОВА

ТИРПЕЙ-ИЛЕМ

# Йĕрке тума мĕн чăрмантарать?

**Шупашкар районĕнчи административлă комисси иртнĕ ларура кăна пурăнмалли вырăна тирпейлесе тăмалли йĕркене пăхăнманшăн ЧР КоАПĕн 10 статйипе 32 ĕç пăхса тухнă. Протоколсем – Кӳкеç, Лапсар, Чăрăшкасси, Çырмапуç, Ишлей, Янăш, Апаш ял тăрăхĕсенчен. Унпа килĕшӳллĕн, уйрăм çынсене кăна мар, яваплă сăпатсене те явап тыттараççĕ. Штраф санкцийĕсем 200 тенкĕрен пуçласа темиçе пин тенкĕ таран. Ку та шухăлаттармасть-шим? Лару-тăру лайăх енне улшăнни сисĕнсех каймать. Çын куçĕ курмасть теççĕ пулĕ те – çӳп-çапа ял хĕрринчи вăрмана кайса тăкаççĕ, е çырмана...**



Апаш.

Апаш ял тăрăхĕнче санкципе пăхман 3 свалкăна тасатнă. Сăн ӳкерчĕкри унччен 20 метр радиуса тăсăлнă купана тасатса тăма тирпейлӳçĕсене пĕрре те çăмăл мар: кил-çуртри çӳп-çапа ял халăхĕ кăна мар, иртен-çӳрен те автомашинăран пăраха-пăраха хăварать. Чӳречерен пăхсан тӳрех курăнакан ӳкерчĕк çак çурт хуçисен кăмăлне те çĕклемест паллах. Ял тăрăх пуçлăхĕ Александр Владимиров ыйту çивĕчлĕхне ăнланать. Тĕп чăрмавсем вара, вăл каланă тăрăх, транспорт çителĕксĕрлĕхĕпе çыхăннă.

Çырмапуç ял тăрăхĕнче Санкципе хушман тăватă свалкăна тĕп тунă, кĕске хушăра кăна вунă КАмаЗ çӳп-çап тиесе тухнă. Территорие таса тытас тĕллевпе 24 контейнер туяннă кунта, тăххăрăшĕ пухнă çӳп-çап сапаланасран – решетке виткĕçлĕ. Вуннăшне вырнаçтарнă. Вĕсене вăхăтра пушатса тăрасси пирки ку ял тăрăхĕнче ыйту çук. Хальхи вăхăтра карантайкассисемпе тата чăрăшкассисемпе çакна валли килĕшӳ тăвассипе ĕçлеççĕ. Анчах контейнерсене никам та хăйсен килĕн çывăхне лартасшăн мар. Ирĕксĕрех хуçасăр çуртсен çывăхне вырнаçтарма тивет. Ку ял

ЯЛ ТĂРĂХĔСЕНЧЕ

## Вожатăйсен семинарĕ

Çатра Хучахматри вăтам пĕлӳ паракан шкулта аслă вожатăйсен кăçалхи вĕренӳ çулĕнче юлашки семинар иртнĕ. Унта шкулти ачасен обществăлла организацийĕсен кăçалхи ĕçне пĕтĕмлетнĕ, çитес çулхи плансене палăртнă. Ачасен пултарулăхĕн центрĕ вĕсене методика пулăшăвĕ панă – шкул çумĕнчи лагерьсен ĕçĕн программине, уявсен сценарийĕсене, лагерь сменин тематика кунĕсене хатĕрлесе панă т.ыт.те. ■

## Кăшавăшсем туристсене кĕтеççĕ

Кăшавăш ял тăрăх территорийĕнче «Ясна» этноспа экологи поселенине хатĕрлемелли проект пурнăça кĕме пуçланă. Çак проект Чăваш Республикинчи туризма аталантармалли утăмсенчен пĕри пулĕ. Вăл «2011-2016 çулсенче Чăваш Республикинчи туризма аталантарасси» тĕллевлĕ программăна кĕнĕ, – «Чăваш Енĕн çичĕ тĕлĕнтермĕшĕ» республика конкурсĕн тата «Ĕçлĕхлĕ Раççей мухтавĕ – 2010» Пĕтĕм Раççейри конкурсĕн лауреачĕ.

Кăшавăша чи малтанхи экскурсантсем, Шупашкарти 39-мĕш шкул ачисем, 500 çулхи Киремете курма килнĕ. ■

## Ачасен прависене пăсма ан хăйăр!

Июнĕн 1-мĕшгĕнче Атайкасси ял библиотекинче право сехечĕ иртнĕ. Ăна Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна халалланă. Библиотекарьсем «Кашнийĕн мĕн пĕлмелле?» темăпа курав йĕркеленĕ. М. А. Михайлова библиотекарь «Консультант плюс» дискпа ачасене хӳтĕлекен право законодательствипе паллаштарнă. ■

# Вектор

АКИ-СУХИ



**Хуçалăх нумай çул ӳсекен курăк ӳснĕ çĕр çинче çинче кăçал тĕш тырă акнă, çавăнпа хими препарачĕсем сапмасăрах кунта ӳсекен тулă тымарĕсем сывă та парка.**

# Уй-хир ешерет, чун савăнать

**Хресчен çурхи ака ĕçне вĕçлерĕ. Акнă тырă шăтса тухрĕ, уйсем симĕс кавирпе витĕнчĕç. Анчах мĕнлерех кăтартусем-ха хуçалăхсен? Шăтса тухнă калчасен пахалăхĕ кăçал еплерех? Мĕнле культурăсем акнă район уй-хирĕсенче?**

Çурхи ака ĕçĕсене тĕрĕслесе пĕтĕмлетӳ тăвас тĕллевпе июнĕн 1-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисемпе агрономĕсем, район администраци пуçлăхĕ Виктор Михайлов, унăн пĕрремĕш çумĕ Владимир Мустаев, тĕп агроном Алексей Смирнов, Россельхознадзорăн республикăри ертӳçи Алевтина Титова, Россельхознадзорăн Шупашкар районĕнчи филиал пуçлăхĕ Людмила Добролюбова, Чăваш Республикин ял хуçалăх министерствин инноваци пайĕн тĕп специалист-эксперчĕ Владислав Григорьев районти уй-хире тĕрĕслерĕç.

*«Элитлă вăрлăхсем ытларах акма, удобренисемпе усă курма тăрăшмалла, Правительство çавăн пек хуçалăхсене субсиди парать».*

Чи малтанах Муркашпа чикĕленекен аякри çĕрсене çитрĕç, «Атăл» СХПК уйĕсенче пулчĕç. Майăн 22-мĕшĕнче 33 га çинче акнă сĕлĕ япăх мар шăтса тухнă. Хир таса, çум курăкĕсĕр. Вăрлăха вăтам тарăнăшне акса хăварнă. Сĕлĕ вăрлăхне хими препарачĕсемпе апатлантарман, мĕншĕн тесен сĕлĕ – çĕре тасатакан культура. Вăтамран илсен ку хирти ӳсекен культура пахалăхне экспертсем 4,5 балпа палăртрĕç.

– Пуçламăшĕ лайăх , – терĕç тĕп агрономпа Россельхознадзор ертӳçи. – Ку эрне вĕçĕнче хире гербицидсем хывмалла çеç.

**«Чурачикское» ОАО** хуçалăх хирĕсем пуян. Евгений Шалеев люцерна уйĕпе паллаштарчĕ. Хими препарачĕсемпе апатлантарнă вăрлăхран шăтса тухнă калчасене нимле чир те ермен. Вĕсем парка, çăра. Сиенлĕ хурт-кăпшанкă ĕрчесрен бактериаллă удобренисем сапма каларĕ Алевтина Титова.

440 га çинче акса хăварнă кукуруза 145 см ӳснĕ ĕнтĕ. Ăна механизаторсем кунĕн-çĕрĕн акнă.

Ку хире малтан 4 ц селитра, 150 ц кăткăс удобренисем сапнă.

– Кăçал пур вăрлăха, çав шутрах кукуруза вăрлăхне те, хими препарачĕсемпе апатлантарнă, – терĕ хуçалăх ертӳçи.

Кăçалтан **«Прогресс» ЗАО** «Чурачикское» ОАО хуçалăхпа пĕр туртара ĕçлеме пуçланă. Вĕсем хăйсен уй-хирĕсенче 125 га пĕр çул ӳсекен курăксем, 50 га вăрлăхлăх нимĕç пăрçи, 60 га тулă акнă. Кăçал ку хуçалăхра акман пушă çĕр пĕрре те хăварман. Хирĕсем те таса, тӳрĕ йĕрпе шăтнă калчасем илемлĕн курăнса лараççĕ, сиенлĕ хурт-кăпшанкăсем те курăнмаççĕ.

Пурĕ 12 хуçалăхра пулчĕç комисси членĕсем. Элитлă сортсемпе «Чурачикское» хуçалăх ăнăçлă ĕçлет. Ыттисем чылайăшĕ унран вăрлăх туянаççĕ.

**Ленин ячĕллĕ СХПК** хирĕсем те савăнтараççĕ – 80 га çинче 3 сортлă урпа, выльăхсем валли «козлятник» сорт пĕр çул ӳсекен курăк, 300 га кукуруз, 263 га тулă, 683 га урпа тата ытти культурăсем акнă. Хуçалăх нумай çул ӳсекен курăк çĕрĕ çинче кăçал тĕш тырă акнă, çавăнпа кунта акнă тулă тымарĕсем хими препарачĕсем сапмасăрах сывă та парка.

– 35 центнертан кая мар пулать кунта тухăç, – тесе палăртрĕ Россельхознадзор ертӳçи Алевтина Титова.

**«Ольдеевская» ЗАО АФ** хирĕсем – чăннипех те ешĕл кавир. Кунта халĕччен пулманнине кĕрхи вика, «Ачча» сортлă урпа ӳстереççĕ. Тритикалене часах вырмалла та пулать. 102 га çинче акнă люцерна та, районланă «Ачча» урпа та, 11 га çинчи кукуруза та, ытти культурăсем та парка шăтса тухнă. Хирсем çум курăкĕсĕр, таса, илемлĕ курăнаççĕ. Пăхсан, куç савăнать. Вăрлăхсене хими препарачĕсемпе апатлантарни те куç кĕрет, тымарсем чирлĕ мар, çирĕп, иккĕмĕш тымар яраççĕ.

**«Атлашевский» СХК** хирĕнче 29 га çинче çитĕнекен элитлă сортлă тритикале питĕ парка çитĕннине курса пурте тĕлĕнчĕç, ушкăнпа пĕрле тăрса сăн ӳкерттерчĕç. Ку хçалăхра элитлă сортсемпе ытларах ĕçлени палăрать. 31 га çинчи «Красноуфимская-100» çурхи тулă лайăх тухăç парасса шанма май пур. Ку хуçалăхра 1025 га çурхи культурăсем, 209 га кукуруз, 520 га çинче кĕрхи культурăсем тата ытти те ӳсеççĕ. Кашни га çĕр çине 100 кг аммиак селитри хывнă, кукуруза уйне вара – 200 кг таранах.

**«Приволжское» учхоз** çĕрĕ çинче 25 га кĕрхи тулă, 21 га çурхи тулă ӳсет. Кунта çĕнĕ технологисемпе усă курнă. Ĕнер çеç Шарпей пыйтисене пĕтермелли препарат сапнă. Калчасем питĕ лайăх кайнă, тухăç та лайăх пулмалла. Кĕлете хывас умĕн малтан кĕлет сăвăсĕсенчен хими препарачĕсем сапмалла тесе асăрхаттарчĕ Алевтина Михайловна. Учхоз хирĕсенче студентсем те ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçне 4,5 балпа хакларĕç. Кашни çулах хăмла та лартса çитĕнтереççĕ иккен кунта студентсем. Хунавĕсем лайăх кайнă, çӳлелле кармашсах ӳсеççĕ.

Кунта 58 га урпа ӳсет. Вăрлăха хими препарачĕсемпе апатлантарманнипе унăн тымарĕсем тутăх тата ытти чирпе сиенленнĕ. Çак кун тĕлне 3-4 тымар ямалла пулнă, анчах та тухайман. Тырă пучаха лараймасть тесе палăртрĕç специалистсем.

– Вăрлăх аксан кашни икĕ кунра тĕрĕслесе тăмалла. Мĕнле шăтаççĕ, мĕнле ӳсеççĕ калчасем? Икĕ тĕрлĕ чир аптратать калчасене: хăмăр тутăх тата тымар çĕрĕкĕ. Вăрлăхсене хими препарачĕсемпе апатлантарни лайăх, вĕсене чир ермĕ. Анчах та сиенлĕ хурт-кăпшанкăсенчен вăл хăтараймĕ. Çавăнпа та çывăх вăхăтрах калчасене азотпа фтор удобренийĕсем хывмалла, биологи удобренийĕсем кирлĕ, – ăнлантарчĕ Россельхознадзор ертӳçи. – Унсăр пуçне элитлă вăрлăхсем ытларах акма, удобренисемпе усă тăрăшмалла, Правительство çавăн пек хуçалăхсене субсиди парать.

Хир курма тухнă специалистсем «Искра» СХПК, «Пучах» колхоз СПК, «Куйбышев» ячĕллĕ колхоз СХПК, «Чернуха» КФХ хуçалăхсене те çитсе курчĕç, вĕсен ĕçне хакларĕç, кирлĕ сĕнӳсем пачĕç.

– Паянхи кун тĕлне илсен Шупашкар районĕн уй-хирĕнчи акнă тырăн 80-90 проценчĕ лайăх тесе палăртмалла, – тесе пĕтĕмлетрĕ Шупашкар район администраци пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Владимир Мустаев.

■ ЛЮДМИЛА САЧКОВА



Çырмапуç.

тăрăхĕ пысăк тееймĕн, çавăнпа та вырăнти хăй тытăмлăх органĕн пуçлăхĕшĕн Сергей Ванюшкиншăн ăна учаастковăйпа пĕрле çаврăнса тухасси пĕрре те чăрмавлă мар. Тавралăха вараланăшăн кунта 9 протокол çырнă.

Тренккасси çывăхĕнчи вăрманта тирпейлеме ял халăхĕпе, администраци ĕçченĕсемпе пĕрлех шкул ачисене те явăçтарнă. Çӳп-çапа купана пуçтарнă ĕнтĕ, ăна тиесе тухма Шĕнерпуç ял тăрăх пуçлăхĕ Вячеслав Столяров иртнĕ эрнерех калаçса татăлнă. Яваплăхсăр подрядчиксем сăмаха çилпе вĕçтернĕ курăнать – паянхи кун та çук. Участковăйсен пулăшăвĕсĕр, чăн та, йĕрке тума çăмăл мар-тăр çав.

■ ТАТЬЯНА МАЙОРОВА



Шĕнерпуç.

АКАТУЙ

## Уçланкă чăваш кĕввипе чĕрĕлĕ

**Июнь уйăхĕн 5-мĕшне район чăтăмсăррăн кĕтет. Акапа суха уявĕ кăçал мĕнпе савăнтарасси пирки Шупашкар район администрацийĕн культура пайĕн пуçлăхĕнчен Маргарита Павловăран ыйтрăмăр.**

Шупашкар районĕ историре йĕр хăварнă ятсемпе тивĕçлипех мухтанма пултарать. XVII ĕмĕрте пурăннă Пăрттас кнеç акă чăваш çарне Мининпа Пожарский хыççăн ерсе пынă паттăр пулнă. Уяв программинчи «Вăхăтсен çулĕ» хореографи композицине те Шупашкаркассинчен тухнă Пăрттас кнеçе евĕрлетнипе пуçлас шухăш ăнсăртран çуралман. Тĕп хулари истори реконструкцийĕн «Егерь» клубĕн хĕç-пăшаллă «çарĕ» куракансене темиçе ĕмĕр каяллахи пурнăça тавăрĕ.

Малалла «Вăхăтсен çулĕ» пирĕн ентеше, Никита Бичурина, монахсен хушшинче сăнлĕ.

Халăх акана тухни, сисетĕр пулсассăн, пире паянхи пурнăça çывхартать. Çак ӳкерчĕке те артистсем ĕненмелле сăнарласа кăтартĕç. Н.Осиповăн «Айтар» драминче тĕп роле вылянă СССР халăх артистне Борис Алексеева уяв сцени çинче тепре курма май



килĕ – вырăнти актерсем унпа тупăшса пăхĕç. Танлашайĕç-и?

Фольклор композицийĕ хыççăнхи номерсене Космонавтика çулталăкне халалланă номерсем улăштарĕç. Вун-вун хăмпă çĕкленĕ тӳпене!

■ ВИКТОРИЯ ВЫШИНСКАЯ

*Пурнăç таппи*

# Мĕнле унта, Германире?

**66 çул каялла пирĕн совет салтакĕсем чылай çĕршыва фашистсенчен хăтарса Европăна çуран утса çитнĕ. Çав çĕршыв çыннисем кайран пирĕншĕн туссем пулса тăчĕç. Германи икĕ пая уйрăлнă май ГДР та демократи çулĕпе утрĕ.**

СССР тата ГДР мирлĕ килĕштерсе çĕнĕ пурнăç йĕркелеме тытăнсан халăхсем пĕр-пĕрин пирки ытларах пĕлме тăрăшрĕç. XVIII ĕмĕрте нимĕçсем те Раççее куçа-куçа килнĕ. Вĕсен йышĕ 1960 çулта 1 млн та 600 пине çитетчĕ. Шупашкарта «Союзпечать» киоскĕсенче «Нойес Лебен», «Нойес Дойчленд» хаçатсем, нимĕç журналĕсем сутатчĕç. Кĕнеке лавккисенче ют чĕлхепе çырнă кĕнекесем нумайччĕ. Туристсем чикĕ леш енне профсоюз тата комсомол путевкисемпе курма çўренĕ. Уйрăмах ГДР, Польша, Чехословаки, Болгари, Югослави çĕрĕсене. Экскурси вăхăтĕнче вĕсене çĕнтерўçĕ-салтаксен палăкĕ, мемориал комплексĕ патне илсе кайнă. Берлинри Трептов-паркра пулни халĕ те асра.

ГДРпа ФРГ пĕрлешни 20 çул. Чикĕ леш енчи халăх кун-çулĕпе кăсăкланакансемшĕн çак тĕрленчĕк усăллă пулĕ.

Х ĕмĕрте Европа варринче пурăнакан франк, алеман, бавар, тюринг, сакс йăхĕсем франк империйĕ шутне кĕнĕ. Германи халăхĕ çав импери салансан тин уйрăм патшалăх туса хунă. Çавах XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче те вырăнти кнеçсем, герцогсем, патша таврашĕсем уйрăм çĕрсем тытса тăнă. Çавăнпа халăх тĕрлĕ диалектпа калаçнă. Нимĕçсем халĕ те икĕ чĕлхепе калаçаççĕ темелле: килте – ĕлĕкрех хăнăхнă чĕлхепе, ĕçре, шкулта, пухусенче – литература (сцена) чĕлхипе. Вĕсен те, чăвашсенни пекех, тури тата анатри калаçу тĕсĕсем пур. Нимĕç чĕлхинче кашни сăмах, кашни аффикс хăй вырăнĕнче. Унта чăваш чĕлхи грамматикипе пĕрпеклĕхсем пурри сисĕнет.

Германипе кўршĕллĕ Австрире, Швейцарире, Люксембургра, Лихтенштейнра нимĕçле калаçаççĕ. Голланди чĕлхи нимĕç чĕдхине чи çывăххи. Çўлерех асăннă çĕршывсемсĕр пуçне Германи чиккисем тăрăх Дани, Польша, Франци, Бельги вырнаçнă.

ФРГ 357000 км² лаптăкра вырнаçнă. Кунта 80 млн çын пурăнать. Промышленноç аталанăвĕ енĕпе вăл паян тĕнчере тăваттăмĕш вырăнта. Ял тата вăрман хуçалăхĕ, пулă тытасси çўллĕ шайра.



**Германи. Бранденбург хапхисем.**

Ытти çĕршывпа сутуилў йĕркелес тĕлĕшĕпе Германи АПШ хыççăн 2-мĕш вырăнта. 2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен укçан евро виçине йышăннă. Евро 1,95 нимĕç маркипе танлашать. Вĕрентў тытăмĕнчи уйрăмлăхсем те интереслĕ пирĕншĕн. Пуçламăш шкул хыççăн лайăх вĕренекенсем гимназие куçаççĕ. Тепĕр тăхăр çултан экзамен тытса «писĕлĕх аттестатне» илеççĕ. Вара кирек мĕнле аслă шкула та экзаменсăрах кĕме пулать. Тăватă класс пĕтернĕ ытти ачасем реальнăй училищĕре е профтехучилищĕре вĕренсе вăтам пĕлў илеççĕ. Вĕренўре япăх ĕлкĕрсе пыракансем эрнере пĕрре ятарлă шкула çўресе пĕр-пĕр специальноçе хăнăхаççĕ.

Нимĕçсем – дисциплинăна çирĕп пăхăнакан халăх. Каçхине, 7-8 сехет хушшинче, телевизорпа е радиопа çĕнĕ хыпарсем пынă чух çын патне шăнкăравласа чăрмантармаççĕ.

Вĕсен нумай ачаллă çемьесем сахал. 100 çемьерен 5-шĕ кăна 5 çынран тăрать. Пĕччен пурăнакансем нумай. Германире пирĕн ентешсем йышлă. Вĕсемпе курса калаçма яланах кăмăллă.

**ТАМАРА ВЕРЕНДЕЕВА, ÇĔНЬЯЛ-ПОКРОВСКИ**

ЫРĂ ĔÇ

## Чăваш халăхĕ Андриянпа мухтанать

Кăçал – Раççей космонавтикин çулталăкĕ. Юрий Алексеевич Гагарин космоса çул хывни 50 çул çитрĕ. Çитес çул вара пирĕн ентеш Андриян Григорьевич Николаев космонавт тĕнче уçлăхне хăпарни çур ĕмĕр çитет. Вăл чăваш халăхне çăлтăрсем таран çĕклерĕ.

Андриян Николаев Чăваш Ене килсен, яланах халăхпа тĕл пулса, çын нушнине ăнланса, тĕрлĕ ыйтусем татса пама тăрăшнă. Кўкеçри суйлавçăсемпе (1072 ç.) тĕл пулни халĕ те асрах. Вăл вĕçевре пулни 50 çул çитнĕ тĕле Республикăри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен (пенсионерĕсен) канашĕ çĕнĕ палăк лартасси пирки чĕнсе каларĕ. Чăнахах та питĕ пысăк ĕç çакă!

Çакăн пирки канашлура сўтсе явса палăк лартма халăхран нимелле укçа пуçтарас тесе йышăнчĕ. Халăх (уйрăмах пенсионерсем) çак йышăнăва кирлĕ ĕç вырăнне хучĕç, кашни тăрăхран укçа пуçтарма пуçларĕç.

Çĕньял ял тăрăхĕнчи Шăмăш енчи пенсионерсем те палăк валли укçа хыврĕç. Ватă çынсем А. Г. Николаев чăваш халăхĕшĕн пысăк ĕçсем тунине пĕлсе, аякра тăрса юлмарĕç. Çак енчи 5 ял çыннисем (Арккасси, Типçырма, Питтукасси, Оппукасси, Шăмăш) хутшăнчĕç,



типçырмасем чи хастаррисем пулчĕç. 5 ялти çынсем 10 пине яхăн укçа пухрĕç. «Пĕр ăс аван, çиччĕ тата аван», – тенĕ ватăсем. Çак сăмахăн пĕлтерĕшне тĕпе хурса, А. Г. Николаев палăкне чăнахах та кирлĕ вырăна, çамрăксене патриотла воспитани парассине тĕп вырăна хурса лартасса шанас килет.

**КСЕНИЯ МИХАЙЛОВА, ШĂМĂШ ЕНЧИ ВЕТЕРАНСЕН КАНАШĔН ЕРТЎÇИ**

АСЛĂ ĂРУ

# Туслă çемье

**«Çемье ăшши – чун ăшши» – çак ăслă сăмахсен пĕлтерĕшĕ тарăн шухăша ярать. Килĕшў, ăшă кăмăл, юрату хуçаланакан çемьесем чăнах та çирĕп. Çакăн пек çемьесен шутне кĕрет Чумкасси ялĕнче пурăнакан Мария Павловна Павловăн кил-йышĕ. Кирек камран ыйтсан та, вĕсем çинчен ырă, йышлă, туслă çемье тенине илтетĕн.**

Петр Дмитриевичпа Мария Павловна 7 ача çуратса ўстернĕ – 2 ывăлпа 5 хĕр. Паянхи кун вĕсем пурте сывă, пĕр-пĕринпе туслă пурăнаççĕ.

Петрпа Мария иккĕш те Чумкасси ялĕнче çуралса ўснĕ, мĕн пĕчĕкрен, çамрăклах пĕр урамра пурăннă. Вĕсем хушшинче малтан туслăх пуçланнă, кайран вăл юратăва куçнă. Икĕ çамрăк, 1951 çулта пĕрлешсе, 1983 çулччен пĕрле шăкăл-шăкăл пурăннă. Петр Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçнă. Фронтовик вăрçă пĕтсен те тўрех киле таврăнман, тепĕр 3 çул Мускавра çар тивĕçĕсене пурнăçланă. Каярахпа, мирлĕ ĕçе кўлĕнсен, вăл ял Совет секретарĕнче халăхпа яланах ырă кăмăллă пулнипе, çынсене пулăшма тăрăшнипе, кирлĕ ыйтусене вăхăтра татса пама пултарнипе палăрнă. Анчах та вăрçă участникĕ фронтри сурансене пула 28 çул каялла пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ. Мария Павловна кил хуçине çухатсан 7 ачапа тăрса юлнă, вĕсене тĕрĕс воспитани парса ура çине тăратнă, çĕршыва юрăхлă çынсем туса ўстернĕ.



– Петĕрпе иксĕмĕр эпир пуян çын ачисем пулман. Пире атте-анне мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарса ўстернĕ. Эпир йывăр вăхăтра çитĕнтĕмĕр. Манăн ĕç стажĕ 12 çултанах пуçланнă. Вăрçă вăхăтĕнче те, кайран та колхоз хирĕнче тар юхтарса ĕçленĕ, пурнăç лайăхланасса кĕтнĕ. 1970-мĕш çулсем хулана тирпей-илем кўрекен хуçалăх организацийĕнче, юлашки 17 çула Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçлесе пенсие тухрăм. Пенси хыççăн тата 4 çул ĕçлерĕм. Çав вăхăтрах пай илсе канмалли кунсенче колхоз çĕрĕсем çинче вăй хунă, пĕрре те алă уссаларман, – аса илет Мария Павловна.

Хăй ĕмĕрĕнче вăл сахал мар грамота, тав хучĕ, «Ĕç ветеранĕ» медаль илме тивĕç пулнă. 82 çулти Мария Павловна паянхи кун Валя хĕрĕн çемйипе пурăнать. Кил-тĕрĕшри ĕçсене халĕ те хутшăнать. Ачисем те унăн хăй пекех пурте ĕçчен, ялта хуçалăх тытаççĕ, ашшĕ-амăшĕн ĕçне малалла тăсаççĕ.

Аслă хĕрĕ Нина Арккассинче пурăнать, Чăваш Республикин Президент администрацийĕнче ĕçлет. Кĕçĕн ывăлĕ Сергей Петрович – Чăваш Енĕн халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертўçи. Вăл та çак ялтах тымар янă. Мария Павлован – 7 ача, 12 мăнук, мăнукĕн ачисем те – 7. Ачисем пурте тенĕ пекех ялта пурăнаççĕ, Римма вара Таганрог хулинче çемье çавăрнă.

**КСЕНИЯ МИХАЙЛОВА, АРККАССИ**

КАШНИН ХĂЙĔН ПУРНĂÇĔ

# Аннене каçармарăм

Эпĕ сывлăхран хавшак ўсрĕм, ялан чирлеттĕмччĕ, аннешĕн тунсăхласа макăраттăмччĕ. Вĕренме лайăх вĕрентĕм, учительсем мана ятламан. Интернат хыççăн эпĕ аслă пĕлӳ илтĕм, кĕçĕн классене вĕрентекен учительница пулса тăтăм. Тăрăшса ĕçлеттĕмччĕ, хамăн ĕçе юрататтăмччĕ. Мана вара карьера пусмипе çўлелле çĕклеме пуçларĕç. Часах эпĕ патшалăх службинче пĕр яваплă должноçра ĕçлеме пуçларăм. Хам каччă кайрăм, икĕ ача çуратса ўстеретĕп. Упăшка та манăн ырă çын. Анчах ăнсăртран пĕррехинче ман пата ĕçе пĕр карчăк кĕрсе тăчĕ... Пуçа çĕклесе пăхрăм та – анне тăрать! Турăçăм! Ачаранпах курман пулсан та, эпĕ ăна палласа илтĕм. Вăл манпа питĕ калаçасшăн пулчĕ, чылайччен ларчĕ, хăй пурнăçĕ çинчен каласа пачĕ. Вăл тăвата ачаллă арçынна качча кайнă иккен, унăн ачисене пăхса пурăннă, хăй тек ача çуратман. Нумаях пулмасть вара упăшки вилнĕ, тăван мар ачисем ăна хăваласа кăларса янă. Вата аннем халь ман пата пурăнма килесшĕн.

***Эпĕ тăлăх çитĕнтĕм. Атте çул çинчи аварие пула вилсе выртнă. Анне мана пăхас темен, тепре качча кайнă, мана вара интерната панă.***

Эпĕ аннене каçарма пултараймарăм. «Эп сана ача чухне кирлĕ пулман, халь мĕн тума килтĕн?», – тесе çавăтсах кăларса ятăм. Чунра тăнă пĕтĕм çиллĕм капланса килчĕ çавăн чухне.

Унтанпа чылай çул иртрĕ. Анне асран каймасть. Хуть те мĕнле пулнă пулсан та, аннех çав... «Адресне мĕншĕн ыйтса юлмарăмши?», – тесе кулянатăп. Шыраса та пăхас килет, анчах каллех тем чарать... Мĕн тумалла-ши, хам та пĕлместĕп...

**ГАЛИНА**

## «Хăй мĕн шыранине тупнă»



**Светлана, 50 çулта, Кўкеç:**

Ку истори 1-мĕш каналпа кăтартакан Малахов передачин историйĕсенчи пекех пулса тухнă. Мĕн акатăн, çав шăтать. Ку хĕрарăм, паллах, хăй мĕн шыранине тупнă. Эпĕ ăна тўрре кăлармастăп, анчах хĕрĕн амăшне тепле пулсан та каçармаллах ĕнтĕ. Ăна çуратнă амăшĕ вĕт-ха, çапах та...

## «Хĕрĕн амăшне каçармаллах»



**Михаил Егоров, Шупашкар хули, пенсионер:**

Амăшĕ амăшех пулмалла ĕнтĕ. Тен, ун чухне лару-тăру çапла килсе тухнă? Хĕрĕн амăшне каçармаллах, хăй те манаймасть вĕт, епле пăшăрханать...

## «Пурнăç вăрăм пушшипе хўтерсен...»

**Виктория Вышинская, тĕп редактор çумĕ-«Тăван Ен» хаçат редакторĕ:**



«Ача çуратасси тата амăшĕ пуласси пĕр япала тесе шухăшлакан хĕрарăмсем хытă йăнăшаççĕ. Ачисене юратнинчен ытларах хăйне хĕрхенекен, чи малтан хăйĕншĕн пурăнакан амăшĕн хакĕ пуслăх кăна. Пĕр-пĕрне сўтсе явасси ним те мар, пурнăç пăрăнăçĕсем тăрăх, терт-нуша витĕр çав тăрĕс çул çине каялла çаврăнса тухасси чылай хĕнтерех.

Пурте йăнăшаççĕ. Пĕрисем çийĕнчех тўрлетеççĕ ăна, теприсем – пурнăç вăрăм пушшипе хўтерсен кăна. Тăван мар ачисем хăваласа яман пулсан Галина пирки амăшĕ, тен, аса та илмĕччĕ те. Пурнăçри кĕтмен пăтăрмахсем чылай чухне пурнăçа хăйĕн еккине тавараççĕ. Çулсем хушши упраннă кўренĕвĕ çыру авторĕн халĕ те сĕврĕлеймен. Вăл каçарма та хатĕр. Çын кăмăлĕн чи лайăх енĕ çакă.

КАЛАМ-ХА ХАМĂН ШУХĂША

# Тĕрĕс çулпах утатпăр-ши?

**Ĕлĕкхи пурнăçа каялла таварăс çук, апла пулин те вăл аса килет.**

Тĕнчен пĕрремĕш, Граждан вăрçисем, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çав вăхăтра çитĕннĕ çамрăксен пурнăçне чăнчăн тамăка çаварнă. 15-17 çулхи пин-пин яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа ФЗО шкулĕсене, заводсене янă. Ушкăнушкăн çамрăк хĕрсемпе хĕрарăмсем Атăл леш енчи шурлăхран торф кăларса типĕтнĕ. Пирĕн урамри 14 çулхи Анисия Павлова Атăл леш енне лекнĕ, 13 çула кайнă Ольга Иванова, Галя Петрова, Галя Степанова выльăх фермине ĕçе кайнă, çуллахи кунсенче сурăхпа сысна кĕтĕвĕ кĕтнĕ. 12-14 çулхи Гена Матвеев, Андрей Иванов, Виталий Сергеев лаша кўлсе колхозри пур ĕçе те хутшăннă. 15 çул тултарнă Зоя Ивановăпа Нина Александрова ХЭМЗ заводра ĕçе пикеннĕ. Пуçламăш класра вĕренекенсем, килтен-киле çўресе, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, хĕлле уйра



Шкул ачисем лартнă йывăççем тавралăха илем кўреççĕ.

юр тытнă, паланпа пилеш, эмел курăкĕ, тимĕр-тăмăр пуçтарнă. Вĕсемех килсем тăрăх алсиш-нуски, сухари пуçтарса фронта ăсатнă.

Вăрçă хыççăнхи, каярахри çулсене аса илсен, ман вăхăтри е кăшт аслăрах юлташсем, хăйсен тивĕçне йывăр çулсенче çителĕклĕ таран пурнăçланăшăн кăмăллă пулнине пĕлтереççĕ. Эпир те тăшмана çĕнтерме сахал мар вăй хунă. Çакна та каласа хăварас килет: темле йывăр пулсан та, савăнма та, выляма та вăхăт тупнă эпир, чирчĕр те пире пит çулăхман. 1954 çулта Кўкеçри вăтам шкултан вĕренсе тухнă 24 каччă пурте Совет Çарĕн ретне тивĕçлĕ пулнă.

Кўкеçри тавралăха кăна илсе пăхар-ха: поселок çумĕнчи юманлăхри чăрăшсене, кўлĕсем тепĕр енчи парка, Çĕрпў еннелле каякан çул хĕрринчи йывăççене пурне те тенĕ пекех шкул ачисем лартса хăварнă. «Гвардеец», Куйбышев ячĕллĕ колхозсене çĕр улмипе выльăх кăшманне кăларма пулăшнă.

Паянхи законсемпе килĕшўллĕн шкул ачисене 14 çул тултариччен нимĕнле ĕçе те явăçтарма юрамасть. Ку çултан аслăраххисене ачисемпе ашшĕ-амăшĕсем килĕшсен тин тўлевлĕ майпа ĕçлеттерме ирĕк пур-мĕн.

**ЛЕОНИД ПАВЛОВ, ЧĂРĂШКАССИ ЯЛĔ**


**РЕЗУЛЬТАТЫ ОТКРЫТОГО АУКЦИОНА**
**по продаже движимого муниципального имущества Чебоксарского района от 27.05.2011 года.**

На основании распоряжения администрации Чебоксарского района от 18.04.2011г. № 051-р (с изменениями от 26.05.2011г. № 70-р) 27.05.2011г. в 10-00 часов в администрации Чебоксарского района по адресу: Чебоксарский район, пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрацией Чебоксарского района был проведен открытый аукцион по продаже движимого муниципального имущества Чебоксарского района.

| Наименование | Начальный размер, руб. | Количество поданных заявок, участники торгов | Продажная цена, руб. | Победитель аукциона |
|---|---|---|---|---|
| автомобиль марки УАЗ – 31519, 2000 года выпуска, идентификационный номер (VIN) XTT315190Y0027901, модель, № двигателя УМЗ 421В № 90900465, кузов №Y0027901, шасси № Y0028065, цвет кузова (кабины) защитный | 19 000,00 | Подано 3 заявки, участниками признаны: Иванов С.В., Алексеев В.Б., Лукианов Т.Н. | 19 950,00 | Иванов Сергей Вячеславович |

**Председатель комиссии Л.В. Софронова**

5-122

В целях исполнения Закона Чувашской Республики от 01.04.2011 года № 10 «О предоставлении земельных участков многодетным семьям в Чувашской Республике» постановлением администрации Чебоксарского района от 27.05.2011 года № 630 утвержден перечень земельных участков, находящихся в собственности Чебоксарского района для бесплатного предоставления в общую долевую собственность многодетным семьям.

| № п.п. | Местоположение, адрес | Площадь, га | Кадастровый номер | Категория земли | Вид разрешенного использования |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 4 | 5 | 6 | |
| 1 | Янышское сельское поселение, д. Малые Торханы | 0,12 | 21:21: 250701:87 | Земли населенных пунктов | Для индивидуального жилищного строительства |

**Зам. главы – начальник отдела экономики, имущественных и земельных отношений З.Л.Маслова**

5-135

Чувашская Республика Чебоксарский район Администрация Большекатрасьского сельского поселения
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
*03.06.2011 г. № 7* *деревня Большие Катраси*
**О назначении публичных слушаний по Проекту планировки территории**

В соответствии с п. 11 ст. 45 Градостроительство Кодекса РФ, со статьей 14 Устава Большекатрасьского сельского поселения и на основании Положения о публичных слушаниях, утвержденного решением Собрания депутатов Большекатрасьского сельского поселения от 11.11.2005 года, **постановляю:**

1. Назначить публичные слушания по Проекту планировки территории коттеджного поселка «Малиновка» около д. Яуши на 07 июля 2011 года в здании Яушского сельского клуба, начало в 18-00 часов.

2. Подробное описание Проекта планировки территории коттеджного поселка «Малиновка» около д. Яуши разместить на официальном сайте администрации Большекатрасьского сельского поселения.

3. Назначить Афанасьева Анатолия Харитоновича, заместителя главы администрации Большекатрасьского сельского поселения, ответственным за подготовку и проведение публичных слушаний.

**Глава Большекатрасьского сельского поселения С.В. Виноградов.**

5-136


ÇĂЛТĂРСЕНЕ ĔНЕНСЕН

ЭРНЕЛĔХ ГОРОСКОП

**ИЮНЬ 6-12**



21.03-20.04 **СУРĂХ.** Ку эрне сирĕншĕн лăпкă. Ытлашши пысăк улшăнусемпе çĕнĕлĕхсем ан кĕтĕр.



21.04-21.05 **ВĂКĂР.** Эрнен малтанхи кунĕсенче çемьепе ытларах пулăр. Тĕрлĕ вак-тĕвек ĕçпе аппалансах вăхăт иртĕ.



22.05-21.06 **ЙĔКĔРЕШСЕМ.** Пĕччен йĕкĕрешсене çăлтăрсем эрне варринче шăпа пўрнине тĕл пулма шантараççĕ. Эсир кăсăклă тата усăллă çынсемпе курнăçатăр.



22.06-22.07 **РАК.** Калама çук тухăçлă эрне. Укçа-тенкĕ хушăнасса систереççĕ çăлтăрсем.



23.07-22.08 **АРĂСЛАН.** Эрне пуçламăшĕнче ыттисенчен ытлашши çирĕп ыйтнине, кăралăха пула пĕчченлĕхре юлма пултаратăр.



23.08-22.09 **ХĔР.** Умри тĕллевсене пурнăçлас шутпа çанă таварса ĕçе пуçăнма хăтланатăр. Вăй-хал тапса тăрать.



23.09-23.10 **ТАРАСА.** Эрне пуçламăшĕнче яваплăха хăвартан сирсен аванрах. Ĕçе пуçăниччен лайăх шухăшласа пăхăр.



24.10-22.11 **СКОРПИОН.** Ĕмĕтсен аварĕнче путатăр. Юрату хутшăнăвĕсене малти вырăна кăларса тăратакансемшĕн уйрăмах ăнăçлă эрне.



23.11-21.12 **УХĂÇĂ.** Ĕç калкал пынине курса савăнмалли кăна юлать. Савăнăçлă пулăмсем пĕр-пĕрне çине-çинех улăштарĕç.



22.12-18.01 **ТУ КАЧАКИ.** Эрне пуçламăшĕнче туйса илнĕ вăй-хал сирĕн çумри çынсене те кусĕ. Ыттисемпе хăюлăнах тавлашма, çивĕч ыйтусене сўтсе явма пултаратăр.



19.01-18.02 **ШЫВТĂКАН.** Юрату вăййисемпе виç кĕтеслĕхĕсен вăхăчĕ. Йăласем, пурин те пăхăнмалли йĕркесем йăлăхтарнă сире – канăр.



19.02-20.03 **ПУЛĂ.** Эрне пуçламăшĕнче чĕрре кĕрессен, чикĕрен иртсе тавлашсран хăвăра аран-аран тытса чаратăр. Вĕчĕрхенў вăраха пымĕ.

П5-114

ПЫТАРМАСĂР

# Мана театра «сутни...»



## Ĕне касăвне кайсан кĕтӳ пушшин аврине тытса «интервью» парса çӳреме мана мĕн хистенĕ-ши?



**– Венера, эсĕ малтанах артист пулма ĕмĕтленнĕ-и, е йăлтах ăнсăртран пулса пычĕ-и?**

– Ăнсăртран мар, паллах. Эпĕ е кĕçĕн классене вĕрентекен учительница пулатăп тесе ĕмĕтленеттĕмччĕ, е артистка. Ача чухнех тĕкĕр умне тăрса пит-куçа пăркалама юрататтăмччĕ, тĕрлĕ мимика тăваттăмччĕ. Ахăрса кулнă чухне, йĕнĕ чухне еплерех-ши эпĕ тесе хама сăнаттăмччĕ. Савăннă чухне, витлешнĕ чухне мĕнле курăнатăп? Тĕкĕр умĕнче тĕрлĕ кĕпе тăхăнса, шĕлепке, тутăр пĕркенсе çаврăнкалама юрататтăм. Унтан тата мĕн хистенĕ-ши мана ĕне касăвне кайсан кĕтӳ пушшин аврине тытса «интервью» парса çӳреме? Кунĕпех çапла пушă аврине çăвар умне тытса хирте калаçса çӳреттĕм... Çавăнпа пулĕ тус-тантăшсем: «Венера, эсĕ артистка пулатăн ĕнтĕ», – тесе калатчĕç. Эпĕ учительница пулаймарăм, вĕренме кĕнĕ чухне математика предмечĕпе экзамен тытаймарăм, анчах артистка пултăм.

**– Музыка училищине çав тĕллевпе вĕренме кĕнĕ-и?**

– Эх, пырса çитрĕм – ялтан килнĕ хĕрача, тум та çук манăн, хатĕрленсе те ĕлкĕреймерĕм... Экзамен пама хула хĕрĕсем пынă – çӳллĕ кĕлеллĕ пушмаксемпе, капăр тумсемпе!.. Эпĕ çухалсах кайрăм... Вĕсенчен пĕри мана калать: «Кунта куçлăхлисене юратмаççĕ», – тет. Эпĕ хăвăртрах хывса хутăм хайхине, анчах ман пит çинче, çулла хĕвел хĕртнипе, куçлăх йĕрĕсем çаплах юлнă иккен.

Жюрире Зоя Ярдыкова ларать. Вăл мана этюд тума хушрĕ: «Акă, эсĕ хирте çĕлен куратăн, хăраса ӳкетĕн, йĕме пуçлатăн, çынсене чĕнме пикенетĕн. Анчах ку вăл çĕлен мар, патак çеç иккен. Эсĕ сасартăк лăпланатăн та хăвăнтан ху кулма пуçлатăн».

Эпĕ туса кăтартрăм. Мана вара вĕренме илчĕç. Эпĕ Ярдыкова патĕнче калаçу культурине, грим тума, актер ăсталăхне вĕрентĕм. Зоя Дмитриевна мана нумай ăс пачĕ. Вăл тата мана пĕрмаях: «Эпĕ сана театра сутатăп-ха», – тетчĕ.

Эпĕ ун чухне аптраса çапла шухăшлаттăмчĕ: «Мĕнле сутаççĕ-ши вара театра? Мĕн хакпа сутаççĕ?..»

Вăл мана Çамрăксен театрне ĕçлеме ярасси пирки каланă иккен. Шахвăртса калас йăли пулнă унăн. Çапла вара Зоя Ярдыкова мана пиллесе, тĕллесе, ĕмĕтлентерсе театра ĕçлеме ячĕ. «Эсĕ героиня пулмалли артистка», – тетчĕ.

Зоя Ярдыкова – çак театра пуçарса яраканĕ, театр ĕçне тĕплĕ пĕлекен çын.

**– Театрта карьера пусми тăрăх çăмăллăн хăпартăн-и?**

– Эпĕ халĕ те хама студентка пекех туятăп. Кашни рольтен çĕннине вĕренсе, ăсталăха ӳстерсе пыратăп. Театрта кашнинчех мана тĕп рольсем параççĕ. Эпĕ шухăшласа илетĕп çеç, режиссер, ман шухăша сиснĕ пекех, роле сăнарлама кирлĕ мизансценăсем парать. Нумай спектакльти рольсем – чуна таварса вылямаллисем. Кашни ролех шалтан пуçтарăнса, тулса çитсе вылятăп. Ахаль, çиелтен, пушăлла выляймастăп. Сцена çине тухиччен эрне малтан шухăшлатăп, хуллен çав кун тĕлне хатĕрленсе çитетĕп çапла. Пĕррехинче сцена çинче роль вылянă май манăн выртмалла пулчĕ. Партнер мана тăратма пычĕ, алăран тытса тăратнă чухне: «Ай-уй, эсĕ мĕншĕн вĕри вара?», – тесе ыйтать.

Çапла пулса тухать те чылай чухне – сцена çинче ӳт температури сасартăк хăпарать, тем хушăран сивĕнетĕп.

**– Эсĕ тепĕр чухне «вĕри» рольсене те вылятăн. Путишле Маруçка рольне калăплама мĕнле сăрăсем тупрăн?**

– Эпĕ ку рольтен чи малтанах хăраса ӳкрĕм. Пĕр вĕçĕм тĕп рольсене вылянă хыççăн – свинарка ролĕ. Хама «хуçмалла» пулчĕ. Урăх кĕпе хам çине тăхăнса пăхнă пек, çав пурнăçа, лару-тăрăва хуллен кĕрсе пытăм. Художник тата çав роль валли мăнтăр купарчаллă, пысăк кăкăрлă портрет ӳкерсе пачĕ. Çапла ман сăнпитпе пĕрле уттăм та, алăсем те урăхла хускалма пуçларĕç, калаçу та урăхланчĕ. Ялсене выляма кайсан вара тепĕр чухне çапла каланине те илтме тӳр килет: «каснă-лартнă пирĕн ялти Анна свинарка».



**– Артист пурнăçĕ темле кĕтмен ăнсăртлăхпа та пуян. Уйрăмах – гастрольсенче...**

– Пĕррехинче аякри чăвашсем патне гастроле кайсан «Чуп-чуп уйăхĕ» спектакль хыççăн пирĕн пата гримеркăна пĕр çамрăк арçын пырса кĕчĕ. Малтан алăка шаккарĕ те: «Хамăн юратнă артисткăна чечек пама юрать-ши?» – тесе кĕрсе тăчĕ. Çакскер ман ума пычĕ те çурăм хыçĕнчен вĕлтĕрен çыххине кăларса тыттарчĕ. «Ку мĕне пĕлтерет?» – аптăрарăм эпĕ. «Хуть те мĕнле ăнлан», – тесе хăварчĕ. Халĕ те пуçа ватса çӳретĕп – мĕн каласшăн пулчĕ-ши йĕкĕт çакăнпа? Вĕлтĕренне вара мунчана илсе кайса милĕк вырăнне çапăнтăмăр.

**– Мĕнле роль выляма ĕмĕтленетĕн?**

– Питĕ характерлă роль калăплас килет – куракансем залран ман çине шăл хăйраса ларччăр...

**– Çемьере телейлĕ-и эсĕ? Упăшку кĕвĕçмест-и?**

– Çук, пачах та. Упăшка ман Паша ятлă, Мускава ĕçлеме çӳрет. Пирĕн икĕ хĕр ӳсет – Василиса тата Варвара. Эпĕ вĕсене, характерне кура, пĕрне – «Мелодрама», теприне «Комеди» тесе чĕнетĕп. Иккĕшĕ те театра туртăнаççĕ. Асли журналист, писатель пуласшăн.

**– Пашăпа паллашнине каласа кăтарт-ха...**

– Хĕлле, сивĕ февральте троллейбусра пыратпăр. Халăх лăк туллиех, мана хĕстерсех хучĕç. Умра – икĕ каччă. Пĕри ман пирки: «Ку хĕрача часах ман чĕр куççи çинех хăпарса ларать ĕнтĕ», – тет. Тепри вара çаврăнчĕ те ман енне, тĕлĕнсе пăхса тăрать. Ку Паша пулчĕ. Вăл шăпах çакăн умĕн тĕлĕкре тĕтре, чаршав витĕр ман сăна курнă иккен. Паша мана палласа илнĕ. Туслашрăмăр. Эпĕ çав вăхăталла училищĕрен вĕренсе тухса театрта ĕçлеме пуçланăччĕ, хваттер шыраттăмччĕ. Паша мана пĕр карчăк патне вырнаçтарчĕ. Хваттер хуçи уйрăм пӳлĕм пачĕ те: «Ку санăн тӳшеккӳ пулать, ку – минтеррӳ», – терĕ.

Паша вара çав тӳшеке картишне йăтса тухрĕ те патакпа шаккама пуçларĕ. Çĕр çул та шаккаман пуль ăна. Паша питĕ тăрăшса шаккать, хăй тусан ăшĕнче курăнмиех пулнă. Эпĕ вара вăл маншăн епле тăрăшнине хакласа ăна пушшех хисеплеме, юратма пуçларăм. Халĕ Шупашкар районĕнчи Çĕньялта çурт туянтăмăр. Хамăрăн пахча пур. Çĕр çинче чакаланма, уçă сывлăшпа сывлама çав тери аван.

ЛЮДМИЛА САЧКОВА

ДОСЬЕ:

ВЕНЕРА ИВАНОВНА ПАЙГИЛЬДИНА.

**çуралнă:** 1975 çулхи январĕн 7-мĕшĕнче

**ăçта:** Элĕк районĕнчи Татмăш ялĕнче

**ашшĕ-амăшĕ:** Иван Фролович Сорокин, водитель, Алевтина Вячеславовна Сорокина, колхозница

**вĕреннĕ:** Шупашкарти Ф. Павлов ячĕллĕ музыка училищинче

**паллă рольсем:** Катерина (А. Островский, «Аслати»), Наталия (А.Чехов, «Виçĕ пĕр тăван хĕр»), Василиса (Ф.Буляков, «Кая юлнă юрату»), Шелепи (М.Карягина, «Кĕмĕл тумлă çар»), Маруçка (А. Пăртта, «Чăн телей юратура») тата ыт. те

КУЛЬТУРА ХЫПАРĔСЕМ

## Украинăран дипломпа таврăннă

Чăваш патшалăх пукане театрĕн пултарулăх коллективĕ Хусанта иртекен «Науруз» X Халăхсен театр фестивальне хутшăннă. Тĕрĕк халăхĕсен юбилейлă фестивалĕнче кăçал Турци, Казахстан, Кыргызстан, Азербайджан, Туркменистан, Молдова çĕрĕсен профессионаллă театрĕсемпе танах Раççейĕн Тутарстанри, Пушкăртстанри, Дагестанри, Тувăпа Алтайри наци коллективĕсем хăйсен пултарулăхне уçса панă. Е.Лисинан «Мăка хăлха Илюк» («Лопоухий Илпюк») спектаклĕпе сцена çине тухнă чăваш пуканеçисем Хусанта пĕрремĕш хут мар. Пĕлтĕр вĕсене театр вĕрентĕвĕн паллă форумне йыхравланă.

Аса илтерни вырăнлă: Юрий Филиппов режиссерпа актерăн асăннă моноспектаклĕ – «Чăваш Енĕн ылтăн тупри» наци проекчĕпе 2007 çулта Президент грантне тивĕçнĕ виçĕ сцена ĕçĕнчен пĕри. Спектакль художникĕ – Анатолий Розов, композиторĕ – ЧР Искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Андрей Галкин. Наци ӳнерне республика тулашĕнче юмахлă çак спектакль урлă тăваттăмĕш хут кăтартать театр. Хусанти фестиваль умĕн кăна-ха ушкăн Украинăри Пуканеçĕсен «Подільська лялька» VII тĕнче фестивалĕнчен таврăннă. «Мăка хăлха Илюк» спектакль тăрăх Ю. Филипповăн актер ĕçĕ «Марионетка-пуканене ăста итлеттересси» номинаци дипломне çĕнсе илнĕ.

## Поэт ячĕпе – палăк

Чăваш Ен Культура министерстви июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Яков Ухсай палăкĕн чи ăнăçлă эскиз проектне палăртма конкурс ирттересси пирки пĕлтерет. Ку мероприяти – чăваш халăх поэчĕ çуралнăранпа 100 çул çитнине халалланă нумай проектран пĕри.

Палăка поэта пултаруллă чăваш ывăлĕпе пĕр ятлă скверта, Правительство çурчĕпе И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧПУ хушшинче, вырнаçтарĕç.

## Чĕмпĕрсем «Нарспипе» киленеççĕ



Чăваш Республикин Ульяновск облаçĕнчи культура кунĕсен шайĕнче пирĕн кӳршĕсен Николай Казаковăн чăвашла пĕрремĕш «Нарспи» мюзиклне курса савăнма май пулчĕ.

Чăваш классикĕн Константин Ивановăн поэми тăрăх лартнă тăваттăмĕш произведени ку. Куракансене вăл çак çулсенче сцена çинчи авангард элеменчĕсемпе, хореографсен ăсталăхĕпе, талантлă кĕвви-çеммипе, режиссерăн хăюллă шухăшĕсемпе тĕлĕнтерчĕ. Кăçал «Нарспине» Тутарстанпа Самарта та чăтăмсăррăн кĕтеççĕ.

ПĔЛЕТĔР-И?

**Сцена çинчи вăйăа кăмăллакан пултарулăх ушкăнĕсем республикăра пурĕ 699, вĕсенчен 677 – ялсенче. Çак театрсенче пурĕ 7,7 пин çын вылять. Театрсенчен 42-шĕ Халăх ятне илнĕ. 3 – Шупашкар районĕнчен.**

Хуҫа+арӑм

ТĔПЕЛ

## Какайпа сыр саккуски

**6 ПОРЦИ ВАЛЛИ 450 г пĕҫернĕ ĕне какайĕ, 90 г сыр, 1 ҫăмарта, 120 г пуҫлă сухан, 120 г услам ҫу, 120 г майонез, тăвар, авăртнă хура пăрăҫ, ешĕл кирлĕ.**



Ҫăмартана чăмăрла пĕҫермелле, вĕтĕ турамалла. Сухана та вĕтĕ тураса ҫу ҫинче ăшаламалла. Пиҫнĕ какая аш арманĕ витĕр кăлармалла, унта сивĕннĕ ăшаланă сухан, терка витĕр кăларнă сыр, ҫу, ҫăмарта, майонез, пăрăҫ, тăвар ярса лайăх пăтратмалла. Унтан батон форми туса хумалла. Юлнă ҫупа батона ҫиелтен илемлетмелле.

## Тельное

**4 ПОРЦИ ВАЛЛИ 350 г пулă, 100 г хытнă шурă ҫăкăр, 130 г сĕт е шыв, фарш валли 150 г сухан, 20 г маргарин, 120 г чĕрĕ кăмпа, 1 ҫăмарта, 10 г вĕтетнĕ сухари, панировка тума 1 чĕрĕ ҫăмарта, 40 г вĕтетнĕ сухари, 60 г услам ҫу, ешĕл илмелле.**

Пулăран котлет валли хутăш хатĕрлемелле. Туранă пиҫнĕ кăмпана фаршпа хутăштармалла. Сухана вĕтĕ турамалла, ăшаламалла, унта ҫăмарта тата кăмпа, сухари хушса пăтратмалла. Ҫурма уйăх евĕр пайласа хумалла, ăна лăканă чĕрĕ ҫăмартана чиксе кăларса сухари ҫинче йăваламалла. Ҫу нумай янă савăтра хĕреличчен ăшаланă хыҫҫăн 5-7 минутлăха 170 градус вĕри духовкăна лартмалла. Тельноене 2-шер ҫĕр улмипе е хура тулпа памалла. Томат соусĕпе те лайăх.

## Пирожнăй

**10 ПОРЦИ ВАЛЛИ 400 г сахăрлă тĕпренекен печени, 300 г услам ҫу, 2 ҫăмарта, 230 г сахăр, 200 г мармелад, 1 лимон, 100 г иҫĕм хатĕрлемелле.**



Ҫăва лайăх лăкамалла. Ҫăмартана сахăрпа хутăштарса шураличчен пăтратмалла. Унта ҫу, терка витĕр кăларнă лимон хуппи, лимон сокĕ, иҫĕм, тăваткал раснă мармелад, вĕтетнĕ печени хушса лайăх пăтратмалла. Хутăша пергамент хут ҫине хурса ҫавăрмалла, холодильникре 3-4 сехет тытмалла.

### УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ



✓ Ҫуррине раснă сухан шанса ан кайтăр тесен раснă енне ҫу сĕрсе хумалла.

✓ Ешĕл салат шанса кайнă пулсан ăна ăшă шывра кăштах тытмалла.

✓ Креветкăна панцирĕпе те, унсăр та пĕҫерме юрать.



✓ Консервăланă фасоль ҫемҫерех пултăр тесен салат ҫине яриччен 2-3 минут вĕретсе илмелле.

ИЛЕМ

# Ӳт тăртаннине пĕтеретпĕр

**Аҫа амăшĕ пулнинчен лайăххи тата мĕн пур-ши? Анчах та пепкене кун ҫути кăтартнă хыҫҫăн амăшĕн хăйĕн те илемлĕн курăнмалла-ҫке. Ӳт ҫинче тăртаннă вырăнсем пулсан пушшех те шухăшлаттарать. Вĕсене мĕнле пĕтермелле-ха? Пирĕн паянхи сĕнӳсем сире пулăшĕҫ.**



**ТĂВАР ВАННĂЙĔ.** 1 кг ахаль е тинĕс тăварĕ илмелле. Ваннăна шыв тултарсан тăвара унта ямалла. Шыв температури 37 градус пулмалла. 15 минут ваннăйра пулнă хыҫҫăн вырăн ҫине кайса выртмалла.

**КРАХМАЛ ВАННĂЙĔ.** 350-500 грамм крахмала 5 литр шывра ирĕлтермелле. Хутăша хатĕр ваннăна ямалла. Шыв температури 37 градусран иртмелле мар. Ванна вăхăчĕ – 20 минут.

**ЧЕЧЕК ҪĂВĔ ТАТА ТĂВАР.** 2 тумлам салтак тӳми (ромашка) ҫăвĕпе 3 тумлам лаванда ҫăвĕ янă ваннăра выртни ӳте ҫирĕплетет. Ҫусен хутăшĕ ҫине тата пĕр апат кашăкĕ апат тăварĕ яма манмалла мар.

**САЛТАК ТӲМИПЕ ЙĂВАЛАСА ХУМАЛЛА.** 200 г салтак тӳми чечекне пĕр стакан сĕтре вĕретмелле. Унта марльăна е пир татăка чиксе кăларса хырăм е кăкăр ҫинче ӳт тăртаннă вырăнсем ҫине хумалла. Ҫиелтен ҫӳхе утялпа витме манмалла мар. 10-15 минутран ҫуса тасатмалла та ӳт тăртаннинчен ятарлă крем сĕрмелле.

СЫВЛĂХ ❗ СĔНӲСЕМПЕ УСĂ КУРАС УМĔН ТУХТĂРПА КАНАШЛАМА АН МАНĂР.

# Диетăра – салат

✓ Пирĕн сывлăх эпир мĕнле апат ҫининчен нумай килет. Ку никамшăн та вăрттăнлăх мар. Сиплĕ апат чĕрешĕн те пĕлтерĕшлĕ. Тĕрĕс суйласа илнĕ диета ăна тĕрĕс ĕҫлеме тата ҫирĕплетме пулăшать. Уйрăм апатланура кишĕр чи паллă ҫимĕҫсенчен пĕри. Ытти пахча-ҫимĕҫрен вăл чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсем чухне уйрăмах кирлĕ кали тăварĕсен пуянлăхĕпе палăрса тăрать.

✓ «Хĕвел ҫаврăнăш» салат тутлă кăна мар, йӳнĕ те, сывлăхшăн та усăллă. Ăна хатĕрлеме йывăр мар. 5 вăтам кишĕр, 2 апельсин, ҫур стакан хĕвел ҫаврăнăшăн типĕтнĕ вăрри (тасатни), 2 апат кашăкĕ шăршăсăр ӳсен-тăран ҫăвĕ, 1 чей кашăкĕ лимон сĕткенĕ кирлĕ.

✓ Тасатнă апельсина тăваткалласа касмалла, теркăпа хырнă кишĕрпе хутăштармалла, ӳсен-тăран ҫăвĕ ямалла. Унтан лимон сĕткенĕпе сирпĕтмелле, турилккене илемлĕн хурса хĕвел ҫаврăнăш вăррипе сапмалла. Тăвар кирлĕ мар.

ШУТА ИЛМЕ

## Асамлă массаж

Харлаттарса ҫывăракансене пӳрне массажĕ пулăшма пултарать. Ăна тĕкĕр умĕнче выҫ хырăмла тумалла.

Ҫăвара сарлакан кармалла, сылтăм алăн шĕвĕр пӳрнине ҫăвар маччин пĕчĕк чĕлхи хыҫне чикмелле. 2-3 минут унăн мышцисене ҫемҫен массаж тумалла. Унтан – ҫăвар маччине хытăрах пусса. Черетпе пĕр кун – пĕчĕк чĕлхе хыҫне, тепĕр кун умне массаж туни витĕмлĕ. Сиплев – 15 процедура. Массажа ăш лĕкленесрен асăрханса тумалла.

ПĔЛЕТĔР-И?

## Яланах хĕрлĕ мар

Юн яланах хĕрлĕ тĕслĕ мар. Вăл кислородпа пуянланса артерисене ҫитсен кăна хĕрлĕ. Юн тымарĕсем тăрăх чĕре тĕлнелле ӳпкесене ҫĕнĕрен «кĕме» чупнă чухне, кăмрăк йӳҫек газĕпе пуянланнăскер, тĕксĕм хĕрлĕ тата кăвакрах тĕслĕ. Ӳте кастарсан, аммансан хĕрлĕ юн тухать, мĕншĕн тесен сывлăша лексенех вăл самантарах кислород ҫăтса илет.

ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ



## Ҫӳҫ ҫирĕпленет

Ҫӳҫ ик вĕҫленнинчен ҫак маска пулăшать: 1 ҫăмарта сарри, 1 чей кашăкĕ пыл, 1 апат кашăкĕ кастăрка ҫăвĕ, 1 апат кашăкĕ коньяк илмелле. Пурне те хутăштарсан ҫӳҫ ҫине сĕрмелле. 30-40 минут тытнă хыҫҫăн ăшă шывпа, ҫемҫе шампуньпе ҫуса ямалла.

### ВАТТИСЕМ КАЛАҪҪĔ

Кăткă тĕми ҫине канма
лармаҫҫĕ.
Халăх ҫинчи сăмах таканари
шыв пек.
Кĕрт йыттипе ҫыхлансан
кĕрĕксĕр юлăн.

КИЛ-ҪУРТ

## Маргариткăсен кавирĕ

**Ҫурт умĕнчи маргариткăсен илемлĕ клумбине иртен-ҫӳрен ытараймасăр пăхать. Тăрăшуллă, тирпейлĕ кил хуҫисен вĕсем ҫу тăршшĕпех чечекре. Чĕрĕ кавир тикĕс, ешĕл вырттăр тесен нумай та тăрăшмалла мар.**

■ Ҫĕре ҫумран тасатса кăпкалатасси – чи малти вырăнта;

■ Маргариткăсем тăтăш тата нумай шăварнине юратаҫҫĕ;

■ Вăрăм туналлă чечексене валли тĕрев кирлĕ;

■ Тăпрана пулăхлантарни пĕлтерĕшлĕ: 1 $м^2$ валли 8-10 г кали, 30 г фосфор, 20 г азот удобренийĕсем кирлĕ;

■ Сӳннĕ ҫеҫкесене татсах тăмалла, вара ӳсен-тăран ҫеҫкере вăрахрах ларĕ;

■ Маргариткăсем сайра чирлеҫҫĕ, апла пулин те ун ҫулҫисемпе ҫеҫкисем ҫинче хăш-пĕр чухне сăрă пăнтăхсем курăнкалаҫҫĕ. Йĕпе хуртсем ҫав тери юратаҫҫĕ вĕсене.

■ Кăвак чирпе кĕрешме ҫакăн пек хутăш пулăшать: 10 литр шыва 40 г пăрăхăн хлорлă йӳҫекĕ кирлĕ.

■ Ӳсен-тăран ҫинче йĕпе хурт асăрхасан тăпра ҫине метальдегид хурса тухмалла. 10 $м^2$ ҫине – 30 г.

## Кăткăсенчен хăтăлас тесен...

Ахаль ҫĕпреерен йăваланă пăрҫа евĕр ҫаврашкасене ҫĕр ҫийĕн хурса тухмалла. Тăпрапа витсен те, ун ҫийĕнчех хăварсан та юрать – кăткăсем тӳрех тарса пĕтĕҫ.

ВЕТЕРИНАР КАНАШĔ

## Ҫăмартаран - чăх е автан?

**– Чăх айне чĕпĕсем, чăх, автан мар) тухтăр тесен мĕнле ҫăмартасем хумалла-ши? Пĕлтĕр ҫаврака ҫăмартасем хутăм та, манăн ытларах автансем тухрĕҫ.**

■ *Зоя Смирнова,Сархурăн.*



**Алексей ХУНДИМИРОВ,** ветврач (выльăх тухтăрĕ):

– Кăна никам та калаймасть. Чăх е автан пуласссси ҫут ҫанталăкран ҫеҫ килет. Ҫынсенни пекех. Халăхра калаҫҫĕ-ха, шĕвĕр ҫăмартаран автансем тухаҫҫĕ тесе, анчах вăл каларăш ҫеҫ.

Акă, йывăр ҫын хĕрарăм ывăл е хĕр ҫуралассине пĕлесшĕн, анчах малтан кам пулассине планлама ҫук. Хальлĕхе ученăйсем те татса калаймаҫҫĕ. Ҫут ҫанталăк хăй йĕркелесе пырать. Вăрҫă хускалас умĕн ытларах ывăлсем ҫурални паллă.

**Ветеринартан ыйтса пĕлмелли пулсан, 8(83540) 2-12-59 номерпе ирхи 8 сехетрен пуҫласа 17 сехетчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуҫне, шăнкăравлăр.**

# Йĕркелĕх хуралĕнче

## МĔН ÇИТМЕСТ ЭТЕМЕ

ШУПАШКАРТА

### Пуртăпа хăратнăшăн

Тĕп хулари 35 çулти арçын суд тенкелĕ çине ларасси пирки пĕрре те шутламан пуль. Мартăн 10-мĕшĕнче йĕркелĕх хуралçисем алăкран пырса шаккасан хайхискерĕн шăрчĕ тăрса каять. Ăна шалти ĕçсен пайне кайма ыйтсан арçын алла пуртă ярса илсе сулкалашма пуçлать, милиционера вĕлерессипе хăратать. Полицисене чĕнсе илнĕ сăлтавĕ вара – арçын хăйĕнпе çырăнмасăр пурăнакан хĕрарăмпа вăрçăнма пуçлани, ăна кӳренмелли сăмахсем каласа хăратса пĕтерни. Çаксене пулах ĕнтĕ унăн çулталăк çурă колонире юсанма тивет.

ÇĔНĔ ШУПАШКАРТА

### 17 çула тĕрмере ирттермелле

40 урлă каçсан çынна ăс кĕрет теççĕ те ваттисем, анчах çак каларăш 51 çулти арçын валли мар. Вăл пĕлтĕр декабрь уйăхĕнче икĕ хĕрачана пусмăрланă. 13 тата 14 çулти пикесем подъезда ăшăнма кĕрсен вĕсене çак арçын илĕртсе хăйĕн хваттерне чĕнсе кĕртет. 3 сехет пусмăрланă хыççăн хĕрачасем тухса тарма май тупаççĕ. Нумаях пулмасть ку ĕçпе суд пулнă. Çур ĕмĕр çĕр çинче пурăнакан арçынна 17 çуллăха çирĕп режимлă колоние лартма йышăннă, унсăр пуçне унăн хĕрачасене çĕршер пин тенкĕ тӳлемелле.

ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧЕ

### Ӳсĕр чухне анне те анне мар

Черкке тĕпне час-час пăхаканăн вăхăт иртнĕçемĕн пуçĕ те минресе каять çав. Акă, ӳсĕрле Чăрăшкасси ялĕнчи 34 çулти арçын та 62 çулти амăшне часчас чышкă-муклашкă тутантарнă. Февраль уйăхĕнче вара амăшне эрех туянса пама хирĕçленĕшĕн шпагатпа çыхса лартать. Ку çеç мар, пуртă вĕçĕпе пуçран çапса илет. Пенсионерка эрех туянса пама килĕшсен ывăлĕ ăна салтса ярать. Çак самантпа усă курса амăшĕ хĕллехи тумсăрах, урана тăхăнмасăрах урама тухса чупать. Вĕлерессипе хăратнăшăн тата хĕрарăма нушалантарнăшăн арçынна суд 2 çуллăха условнăй майпа айăпланă.

ЫТТИ РАЙОНТА

### Закон пуриншĕн те пĕр

Пуçлăх лавне туртма пуçласан йăнăш çул çине тăракансем те пур. Муркаш районĕнчи пĕр ял тăрăх пуçлăхĕ те 2007-2008 çулсенче хăйне ирĕклĕ туйса илет - ăна пăхăнакансене çурт-йĕре лайăхлатассипе черетре тăман çынсенех регистрацилеме хушать. Çакăншăн вăл 100 пин тенкĕ те илет. Ку çеç мар, хватерпе çыхăннă ыйтусенче ертӳçĕ тата та нумай йăнăш тăвать. Закона пăснăшăн экс-ертӳçĕн 3 çул тĕрмере ларма тивет. Муркаш район сучĕ ăна уголовнăй кодексăн 285-мĕш, 292-мĕш статйисемпе айăпланă.

ЙĂНĂШ ÇУЛПА

## «Шурă вилĕм» ăçта тĕлĕрет?

**Шупашкар районĕчи муниципалитет тата йĕркелĕх хуралĕн органĕсем наркотиксен саккуна хирĕçле çаврăнăшĕпе çыхăннă преступленисене тупса палăртасси пĕлтĕрхипе танлаштарсан 64,3 % таран чакнă. Хыçа юлнă пилĕк уйăхра уголовнăй пĕр ĕç те пуçарман. Районта наркотик пачах та çук-шим? Наркотиксен закона хирĕçле çаврăнăшĕпе тата туртмалли хутăшсемпе кĕрешессипе йĕркеленĕ координаци канашлăвĕнче тĕп ыйту çакă пулчĕ. Унта Раççей ФСКН республикăри управленийĕн районти пайĕн пуçлăхĕ Александр Казиков, Шупашкар район ШĔП пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлаканĕ Андрей Иванов, районти тĕп больница наркологĕ Елена Петрова тата райадминистраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Владимир Мустаев хутшăнчĕç.**



Район прокурорĕн çумĕ Анатолий Иванов ку цифрăсем оперативниксен тăрăшулăхĕпе пĕр пек пропорцилли пирки асăрхаттарчĕ. «Наркотик çулне пӳлессишĕн юлашки икĕ çулта йĕркеленĕ мероприятисенех илер, – терĕ район прокурорĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлаканскер. – наркотĕрĕслевçĕсемпе тĕп больница ĕçченĕсем пуçарнă вĕсене!» Хăйсен кăтартăвĕсемпе вара, Анатолий Петрович шухăшĕпе, мухтанмалли çукрах. «Ăçта вилĕм сутнине пĕлтер» наркотике хирĕçле акцин шанăç телефонне ыйтсан ял тăрăх пуçлăхĕсем те хуравлаймарĕç. Сăмах май, наркотик хатĕрлеме усă куракан мăкăньпе кантăр çитĕнтерекенсем пирки вĕсем пĕлтерне пĕр тĕслĕх те çук. Туртмалли хутăшсемпе закона пăсса суту-илӳ тăвакансем пирки те статистика шарламасть: район ШĔПĕ кунашкал пĕр факта та асăрхаман. Наркотиксен закона хирĕçле çаврăнăшĕпе çыхăннă преступленисене пĕтĕмĕшле пĕлтĕрхи тапхăрта 14 шута илнĕ тĕк, кăçал – 5 кăна.

Районăн тĕп наркологĕ «Спайс» йышши туртмалли хутăшсем çын организмне кӳрекен сăтăр пирки ăнлантарчĕ. Туртнă хыççăн ăстăн арпашăнни, çын аташма пуçлани пирки икĕ çул каялла, кӳршĕ регионри çап-çамрăк йĕкĕт саккăрмĕш хут чӳречинчен сиксе вилсен уççăн калаçма пуçларĕç. «Шурă вилĕм» патне илсе çитернĕ сарăмсăр тĕслĕхсем ун хыççăн хамăр республикăра та пулчĕç. Сутма чарнине пăхмасăрах Чăваш Ен лавккисен сентрисем çинче мар тăк, уйрăм çын аллисенче курăнкалаççĕ. Наркополицейскисем нумай пулмасть Çĕнĕ Шупашкарта тытса чарнă унашкал ушкăна. Шупашкар районĕ те аякра мар. Шурă вилĕм ăçта тĕлĕрнине кăна пĕлесчĕ те...

ТАТЬЯНА МАЙОРОВА

РЕФОРМА

## Республика ведомствин – çĕнĕ ертӳçĕ




Нумай пулмасть Раççей ШĔМ министрĕн çумĕ Сергей Герасимов видеоконференцире Шалти ĕçсен Чăваш Енри территори органĕн ертӳçине Сергей Семенова республика ертӳлĕхĕ умне кăларнă. Чăваш Республикинчи Шалти ĕçсен çĕнĕ министрĕпе паллаштарнă май вăл РФ Президенчĕн çак должноçе Сергей Евстафиевича çирĕплетни пирки калакан указĕпе паллаштарнă. Раççей ШĔМĕн управлени академине пĕтерсе Федерацин кадрсен резерв шкулĕн тĕрĕслевĕнчен тивĕçлĕ тухнă опытлă ертӳçĕ пек хакланă вăл пулас министра.

Республика ведомствин çĕнĕ ертӳçи йĕркелĕх хуралçисен аттестацине тивĕçлĕ шайра йĕркелессине, реформа сăлтавĕпе ĕç вырăнĕсĕр юлнисене пулăшассине тĕп тĕллевсем пек палăртнă. Йывăр ыйтусене татса пама тивнĕ чухне çĕршыв ШĔМĕ айккинче тăмĕ – çапла шантарнă С.Герасимов. Хальхи вăхăтра С.Семенов республикăри оперативлă лару-тăрупа паллашать. «Паян ӳкерчĕк объективлă пулмалла. Граждансен ыйтăвĕсене ячĕшĕн кăна хуравлани кирлĕ мар. Çине-çинех килекен çăхавсене тĕрĕслессине хам çине илĕп», – тенĕ вăл.

ВИКТОРИЯ ВЫШИНСКАЯ

САМАХ МАЙ

**Семенов Сергей Евстафиевич 1960 çулта çуралнă. ШĔМ органĕнчи службăна 1982 çулта Челябинск облаçĕнчи Магнитогорскри Шалти ĕçсен управленийĕн патрульпе пост службин ĕçченĕнчен пуçланă. Инспектортан пуçласа уголовнăй шырав пайĕн пуçлăхĕн çумĕ таран утса тухнă çак çула, криминал милицийĕнче ĕçленĕ. 1996 çулта ăна Магнитогорскри Шалти ĕçсен управленийĕн экономика тĕлĕшĕнчи преступленисемпе кĕрешекен пайне ертсе пыма шаннă. Икĕ çул каялла Челябинск облаçĕнчи Шалти ĕçсен хула управленийĕн пуçлăхĕн çумне куçарнă. Кăçалхи майăн 30-мĕшĕнчен Раççей Президенчĕн Д.Медведевăн указĕпе – Чăваш Республикин ШĔМ ертӳçи.**

## УСАЛ ХЫПАР

**СТОП «КОМАНДОР».** Атайкассинчи 30 çулти пикене кун çути йăлăхтарса çитернĕ-ши? Вăл майăн 27-мĕшĕнче хăй çине алă хума шутланă. Анчах алла лекнĕ «Командор» препарат çынсемпе мар, нăрăсемпе кĕрешмелли-çке. Наркăмăшланнă пикене тĕп хулари больницăна леçнĕ.

**ХИРĔÇМЕЛЛИ ВЫРĂН – КĔПЕР.** Ассакассинчи 43 çулти арçын майăн 22-мĕшĕнче тем асса кайнă, мăшăрĕ çине алă çĕклеме те именмен. Ӳт-пĕве кăвакартмалли вырăн та суйласа илнĕ вăл – Ассакассипе Чĕркаш ялĕсем хушшинчи кĕпер.

**ÇĂПАЛАПА – ПУÇРАН.** Карантайкассинчи 42 çулти А. хăйĕн ашшĕ-амăшне пит юратать пуль те, анчах мăшăрне кун çути парнелекенсене хисеплесех каймасть пулмалла. Ара, хĕрарăм майăн 22-мĕшĕнче 85 çулти хуняшшĕпе вăрçăнса кайсан пуçран икĕ хутчен çăпалапа та лектерсе илнĕ.

**ВĂРĂСЕМ ХУÇАЛĂХА ЮРАТАÇÇĔ.** Тар тăкмасăр пуйма тăрăшакансем Свердлов ячĕллĕ хуçалăха куçран вĕçертмесççĕ. Кунта япаласем часчас «ураланаççĕ». Акă, майăн 20-25-мĕшĕсенче хльлĕхе тупса палăртман çынсем хуçалăхăн Тавăшкассинчи ферминчен алюмини савăтпа электродвигатель йăкăртса тухнă.

**ЕНЧĔК ХУЛĂМЛАНСАХ ПЫРАТЬ.** Ниçта та ĕçлемесĕрех укçаллă пуласси – кахалăн ĕмĕчĕ. Тĕп хулари 34 çулти И. те çак тĕллевпе çеç пурăнать. Вăл апрелĕн 23-мĕшĕнче Ишлейре пурăнакан 73 çулти кинемейрен 32 пин тенкĕ укçа вăрланă.

**Пурăнан пурнăçра темĕн те сиксе тухма пултарать.**

*Усал хыпар утпа çӳрет тесе ахальтен каламан ваттисем. Сирĕн ялта йĕркене пăснă тĕслĕхсем пулсан е «УСАЛ ХЫПАР»-та тĕрĕс мар çырнине асăрхасан*

**8 (83540) 2-12-59**

*телефонпа шăнкăравласа пĕлтерме пултаратăр.*

**Эрне хушшинче Шупашкар районĕнче** Май 16-22




**йĕркене пăснă** (правонарушени)
хулиганла ĕç тунă: **7**
обществăлла вырăнта ӳсĕр пулнă: **64**
обществăлла вырăнта эрех-сăра ĕçнĕ: **6**




**усал ĕç тунă** (преступлени)
**12** уçса панă. **Усал ĕç тăвакансемпе йĕрке пăсакансенчен**: **100** арçын, **4** хĕрарăм, **0** çул çитменнисем




**хут çул-йĕр хăрушсăрлăх йĕркине пăснă**
руль умне ӳсĕр ларнă: **1**, ремень çаклатман: **9**
хăвăртлăха палăртнинчен ӳстернĕ: **60**,
**18** **авари пулнă: 0** çын вилнĕ, **1** сусăрланнă

# ТВ Эрне

Тс ТЕЛЕСЕРИАЛ
**ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ ФИЛЬМ**
**Д ДОКУМЕНТАЛЬНЫЙ ФИЛЬМ**
М Мультфильм

## ИЮНЬ 6 понедельник тунти кун

### ПЕРВЫЙ
**5.00**, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
**5.05** «Доброе утро»
**9.20** «Контрольная закупка»
**9.50** «Жить здорово!»
**11.00** «ЖКХ»
**12.20** «Модный приговор»
**13.20** «Детективы»
**14.00** Другие новости
**14.20** «Понять. Простить»
**15.20** «Хочу знать»
**15.50** Тс «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
**16.50** «Федеральный судья»
**18.15** «След»
**18.55** «Давай поженимся!»
**19.55** «Пусть говорят»
**21.00** «Время»
**21.30** Тс «ГРУППА СЧАСТЬЯ»
**23.50** Тс «БОРДЖИА»
**1.05, 3.05 «НА САМОМ ДНЕ ОКЕАНА»**
**3.15 «ДОБЫЧА»**

### РОССИЯ 1
**5.00** Утро России
**9.05** «С новым домом!»
**10.00** «О самом главном»
**11.00**, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
**11.50** «Родить вундеркинда»
**12.50** «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
**14.50** Вести. Дежурная часть
**15.05** Тс «ЕФРОСИНЬЯ»
**16.50** Тс «ВСЕ К ЛУЧШЕМУ»
**17.55** Тс «ИНСТИТУТ БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
**18.55** «Прямой эфир»
**20.50** Спокойной ночи, малыши!
**21.00** Тс «БУМЕРАНГ ИЗ ПРОШЛОГО»
**23.45** «Дежурный по стране»
**0.45** Вести +
**2.15 «СОБАКА НА СЕНЕ»**

### ЧУВАШИЯ
**11.30**-11.50 Вести-Чăваш ен
**14.30**-14.50 Вести-Чувашия
**16.30**-16.50 Вести-Чăваш ен
**20.30**-20.50 Вести-Чувашия
**На ка**нале «Россия-2»
**8.45**-8.50 Вести-Спорт-Чувашия

### КУЛЬТУРА
**7.00** «Евроньюс»
**10.00**, 15.30, 19.30, 23.30 Новости культуры
**10.15** «Кто там...»
**10.50 «ЖЕЛАНИЕ ЛЮБВИ»**
**12.55** Важные вещи
**13.10** «Линия жизни»
**14.10 «МЕТЕЛЬ»**
**15.40** М «Волшебник Изумрудного города»
**16.00** М «Белолобый»
**16.35** Тс «ДЕВОЧКА ИЗ ОКЕАНА»
**17.00** Д «Страсти по насекомым»
**17.20** «Конкурс Чайковского»
**18.35** Д «Запретный город Китая»
**19.45** Главная роль
**20.05** Сати. Нескучная классика...
**20.45** Academia
**21.30**, 0.45 Д «Мировые сокровища культуры»
**21.45** «Кто мы?»
**22.15** «Тем временем»
**23.00** «Исторические путешествия Ивана Толстого»
**23.50** Д «Интеллигент. Виссарион Белинский»
**1.05 «НЕБОЛЬШОЙ ДИВИДЕНД ОТЦА»**
**2.30** Р. Шуман. Увертюра, скерцо и финал

### НТВ
**4.55** «НТВ утром»
**8.30** Следствие вели...
**9.30**, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
**10.00**, 13.00, 16.00, 19.00, 23.15 Сегодня
**10.20** Обзор. Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
**10.55**, 2.45 «До суда»
**12.00**, 1.45 Суд присяжных
**13.25**, 3.45 «Прокурорская проверка»
**14.40** «Давайте мириться!»
**16.30** Тс «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА»
**19.30** Тс «ЛИТЕЙНЫЙ»
**21.30** Тс «МОСКВА. ЦЕНТРАЛЬНЫЙ ОКРУГ»
**23.35** Честный понедельник
**0.25** «Школа злословия»
**1.10** Главная дорога

### ТНТ
**6.00** Д «Необъяснимо, но факт». «Тайны Тибета»
**7.00**, 7.25 М «Эй, Арнольд!»
**7.55**, 12.30, 13.00, 13.30 М «Приключения Джимми Нейтрона, мальчика-гения»
**8.30**, 8.55 М «Тасманский дьявол»
**9.25**, 10.00 Тс «УНИВЕР»
**10.30**, 14.00, 19.30 Тс «СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ»
**11.40**, 12.00 М «Скуби-Ду и Шэгги ключ найдут!»
**14.30** «Дом-2. Live»
**16.10 «ПОСЛЕ ЗАКАТА»**
**18.00**, 20.00 Тс «ИНТЕРНЫ»
**18.30**, 20.30 Тс «ЗАЙЦЕВ + 1»
**19.00** Тс «РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ»
**21.00 «МОРСКОЕ ПРИКЛЮЧЕНИЕ»**
**23.00**, 3.55 «Дом-2. Город любви»
**0.00** «Дом-2. После заката»
**0.30** «Секс» с Анфисой Чеховой
**1.00 «БЕЗУМИЕ»**
**2.55** «Комеди Клаб»
**4.55** «Школа ремонта»

### ТВЦ
**6.00** «Настроение»
**8.20 «СКАЗКА О ЦАРЕ САЛТАНЕ»**
**9.45 «ПЕРВЫЙ ТРОЛЛЕЙБУС»**
**11.30**, 14.30, 17.30, 19.50, 20.30 События
**11.45** «Постскриптум»
**12.55** «Незаконченная картина»
**13.25** «В центре событий»
**14.45** Деловая Москва
**15.10**, 17.50 Петровка, 38
**15.30** Тс «СЫЩИКИ РАЙОННОГО МАСШТАБА-2»
**16.30** «Врачи»
**18.15** М «Котенок с улицы Лизюкова»
**18.25 «АНИСКИН И ФАНТОМАС»**



**19.55** Порядок действий
**21.00 «МУЖЧИНА ДОЛЖЕН ПЛАТИТЬ»**
**22.50** Линия защиты
**23.40** События. 25-й час
**0.10** «Футбольный центр»
**0.40** «Звезды московского спорта»
**1.10** Тс «МИСС МАРПЛ АГАТЫ КРИСТИ»
**3.05 «ПУАРО АГАТЫ КРИСТИ»**



**4.55** Д «Пустынные мумии Перу»

### СТС
**6.00** Тс «КАК Я ВСТРЕТИЛ ВАШУ МАМУ»
**6.55** М «Смешарики»
**7.00** М «Приключения мультяшек»
**7.30** М «Приключения Вуди и его друзей»
**8.00** Тс «СВЕТОФОР»
**8.30** Тс «ДАЕШЬ МОЛОДЕЖЬ!»
**9.00**, 20.00 Тс «ВОРОНИНЫ»
**9.30**, 23.35 Тс «6 КАДРОВ»
**10.30**, 18.30, 19.00 «Ералаш»
**13.30** М «Настоящие охотники за привидениями»
**14.00** М «Соник Икс»
**14.30** М «Пинки и Брейн»
**15.00** М «Что новенького, Скуби Ду?»
**15.30**, 19.30 Тс «ПАПИНЫ ДОЧКИ»
**17.30** «Галилео»
**21.00 «МЕТОД ЛАВРОВОЙ»**
**22.00 «ВИД СВЕРХУ ЛУЧШЕ»**
**0.00** Шоу «Уральских пельменей»
**0.30** Дневник фестиваля «Кинотавр»
**1.00** Тс «ТЕОРИЯ БОЛЬШОГО ВЗРЫВА»
**1.30 «ЗВЕРЬ»**
**3.15** Тс «РАНЕТКИ»

## ИЮНЬ 7 вторник ытлари кун

### ПЕРВЫЙ
**5.00**, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
**5.05** «Доброе утро»
**9.20** «Контрольная закупка»
**9.50** «Жить здорово!»
**11.00** «ЖКХ»
**12.20** «Модный приговор»
**13.20** «Детективы»
**14.00** Другие новости
**14.20** «Понять. Простить»
**15.20**, 4.20 «Хочу знать»
**15.50** Тс «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
**16.50** «Федеральный судья»
**18.15** «След»
**18.55** «Давай поженимся!»
**19.55** «Пусть говорят»
**21.00** «Время»
**21.30** Футбол. Товарищеский матч. Сборная России - сборная Камеруна
**23.50** «Безумцы»
**1.40, 3.05 «СНАЙПЕР 3»**
**3.30** Тс «СПАСИТЕ ГРЕЙС»

### РОССИЯ 1
**5.00** Утро России
**9.05** «С новым домом!»
**10.00** «О самом главном»
**11.00**, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
**11.50** «Тайна трех океанов. В погоне за призраком»
**12.50** «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
**14.50** Вести. Дежурная часть
**15.05** Тс «ЕФРОСИНЬЯ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
**16.50** Тс «ВСЕ К ЛУЧШЕМУ»
**17.55** Тс «ИНСТИТУТ БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
**18.55** «Прямой эфир»
**20.50** Спокойной ночи, малыши!
**21.00** Тс «БУМЕРАНГ ИЗ ПРОШЛОГО»
**23.50** Вести +
**0.10** «Свидетели». «Мария Розанова. Синтаксис»
**1.15** «Профилактика»
**2.25 «ЛАБИРИНТЫ ЛЖИ»**
**4.10** Тс «ЗАКОН И ПОРЯДОК»

### ЧУВАШИЯ
**6.07-**6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
**7.07-**7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
**8.07-**8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
**9.05** Ирхи тĕпел («Утренний гость» на чувашском языке)
**9.35-**10.00 Тĕлеюрă
**11.30**-11.50 Вести-Чăваш ен
**14.30**-14.50 Вести-Чувашия
**16.30**-16.50 Вести-Чăваш ен
**20.30**-20.50 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА
**6.30** «Евроньюс»
**10.00**, 15.30, 19.30, 23.30 Новости культуры
**10.15**, 19.45 Главная роль
**10.40 «ДЖУЛЬБАРС»**
**12.05** Д «Интеллигент. Виссарион Белинский»
**12.55** Д «Запретный город Китая». «Центр мира»
**13.50** «Пятое измерение»
**14.20 «РОССИЯ МОЛОДАЯ»**
**15.40** М «Волшебник Изумрудного города»
**15.55** М «Он попался!»
**16.35** Тс «ДЕВОЧКА ИЗ ОКЕАНА»
**17.00** Д «Страсти по насекомым». «Путешественники во времени»
**17.25** «Конкурс Чайковского. Золотые страницы». Скрипачи
**18.25** Д «Жюль Верн»
**18.35** Д «Запретный город Китая»
**20.05** Власть факта. «Обыкновенный фашизм»
**20.45** Academia
**21.30** «Больше, чем любовь»
**22.15** «Апокриф»
**23.00** «Исторические путешествия Ивана Толстого». «Старик Онегин».
**23.50 «ПУТЕВКА В ЖИЗНЬ»**
**1.45** Д «Луций Анней Сенека»
**1.55** Д «Старший брат. Академик Николай Боголюбов»
**2.35** Г. Берлиоз. Фрагменты драматической симфонии «Ромео и Джульетта»

### НТВ
**4.55** «НТВ утром»
**8.30** Очная ставка
**9.30**, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
**10.00**, 13.00, 16.00, 19.00, 23.15 Сегодня
**10.20** Чрезвычайное происшествие. Расследование
**10.55**, 3.20 «До суда»
**12.00**, 2.20 Суд присяжных
**13.25** «Прокурорская проверка»
**14.40** «Давайте мириться!»
**16.30** Тс «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА»
**19.30** Тс «ЛИТЕЙНЫЙ»
**21.30** Тс «МОСКВА. ЦЕНТРАЛЬНЫЙ ОКРУГ»
**23.35** «Дело темное». Исторический детектив
**0.25** Кулинарный поединок
**1.25** Тс «БЕЗ СЛЕДА»
**4.20** Особо опасен!

### ТНТ
**6.00** Д «Необъяснимо, но факт». «Загадка ламы»
**7.00**, 7.25 М «Эй, Арнольд!»
**7.55**, 12.30, 13.00, 13.30 М «Приключения Джимми Нейтрона, мальчика-гения»
**8.30**, 8.55 М «Тасманский дьявол»
**9.25**, 10.00 Тс «УНИВЕР»
**10.30**, 14.00, 19.30 Тс «СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ»
**11.40** М «Лунатики»
**12.00** М «Том и Джерри-2»
**14.30** «Дом-2. Live»
**16.15** Тс «МОРСКОЕ ПРИКЛЮЧЕНИЕ»
**18.00**, 20.00 Тс «ИНТЕРНЫ»
**18.30**, 20.30 Тс «ЗАЙЦЕВ + 1»
**19.00** Тс «РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ»
**21.00 «НУ ОЧЕНЬ СТРАШНОЕ КИНО»**
**22.35**, 1.00 «Комеди Клаб»
**23.00**, 4.50 «Дом-2. Город любви»
**0.00** «Дом-2. После заката»
**0.30** «Секс» с Анфисой Чеховой
**1.55**, 2.25 Тс «ДРУЗЬЯ»
**2.55 «ДВУЛИКИЙ УБИЙЦА»**

### ТВЦ
**6.00** «Настроение»
**8.20** М «Ну, погоди!», «Винни-Пух»
**8.40 «УЛИЦА ПОЛНА НЕОЖИДАННОСТЕЙ»**
**10.05** Детективы Татьяны Устиновой. «РАЗВОД И ДЕВИЧЬЯ ФАМИЛИЯ»
**11.30**, 14.30, 17.30, 19.50, 20.30 События
**11.45 «РАЗВОД И ДЕВИЧЬЯ ФАМИЛИЯ»**
**14.45** Деловая Москва
**15.10**, 17.50 Петровка, 38
**15.30** Тс «СЫЩИКИ РАЙОННОГО МАСШТАБА-2»
**16.30** «Врачи»
**18.15** М «Отчаянный кот Васька»
**18.25 «АНИСКИН И ФАНТОМАС»**
**19.55** Реальные истории
**21.05 «ЗОЛУШКА. RU»**
**23.15** Т/ф «Ревнивцы»
**0.05** События. 25-й час
**0.40 «ЛЮБОВЬ ПОД ГРИФОМ «СОВЕРШЕННО СЕКРЕТНО»-3»**
**2.30 «МУЖЧИНА ДОЛЖЕН ПЛАТИТЬ»**
**4.20** Линия защиты
**5.10** «Необыкновенные собаки»

### СТС
**6.00** Тс «КАК Я ВСТРЕТИЛ ВАШУ МАМУ»
**6.55** М «Смешарики»
**7.00** М «Приключения мультяшек»
**7.30** М «Приключения Вуди и его друзей»
**8.00** Тс «СВЕТОФОР»
**8.30** Тс «ДАЕШЬ МОЛОДЕЖЬ!»
**9.00**, 20.00 Тс «ВОРОНИНЫ»
**9.30, 21.00 «МЕТОД ЛАВРОВОЙ»**
**10.30 «ВИД СВЕРХУ ЛУЧШЕ»**
**12.05**, 18.30, 19.00 «Ералаш»
**13.30** М «Настоящие охотники за привидениями»
**14.00** М «Соник Икс»
**14.30** М «Пинки и Брейн»
**15.00** М «Что новенького, Скуби Ду?»
**15.30**, 19.30 Тс «ПАПИНЫ ДОЧКИ»
**17.30** «Галилео»
**22.00 «ЭТО ВСЕ ОНА»**
**23.50** Тс «6 КАДРОВ»
**0.00** Шоу «Уральских пельменей»
**0.30** «Кино в деталях»
**1.30 «ЗВЕРЬ»**
**3.15** Тс «РАНЕТКИ»
**5.10** Тс «ХАННА МОНТАНА»

## ИЮНЬ 8 среда юн кун

### ПЕРВЫЙ
**5.00**, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
**5.05** «Доброе утро»
**9.20** «Контрольная закупка»
**9.50** «Жить здорово!»
**11.00** «ЖКХ»
**12.20** «Модный приговор»
**13.20** «Детективы»
**14.00** Другие новости
**14.20** «Понять. Простить»
**15.20** «Хочу знать»
**15.50** Тс «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
**16.50** «Федеральный судья»
**18.15** «След»
**18.55** «Давай поженимся!»
**19.55** «Пусть говорят»
**21.00** «Время»
**21.30** Тс «ГРУППА СЧАСТЬЯ»
**22.30** Среда обитания. «Что на палочке?»
**23.50** «Городские пижоны». «Белый воротничок»
**0.40** «Калифрения»
**1.10, 3.05 «КОНЕЦ РОМАНА»**
**3.15 «НИ ЖИВ НИ МЕРТВ 2»**

### РОССИЯ 1
**5.00** Утро России
**9.05** «С новым домом!»
**10.00** «О самом главном»
**11.00**, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
**11.50** «Опустела без тебя земля...» Майя Кристалинская»
**12.50** «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
**14.50** Вести. Дежурная часть
**15.05** Тс «ЕФРОСИНЬЯ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
**16.50** Тс «ВСЕ К ЛУЧШЕМУ»
**17.55** Тс «ИНСТИТУТ БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
**18.55** «Прямой эфир»
**20.50** Спокойной ночи, малыши!
**21.00** Тс «БУМЕРАНГ ИЗ ПРОШЛОГО»
**23.50** Вести +
**0.10** «Свидетели». «Мария Розанова. Синтаксис»
**2.30 «ЛАБИРИНТЫ ЛЖИ»**
**4.20** Тс «ЗАКОН И ПОРЯДОК»

### ЧУВАШИЯ
**6.07-**6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
**7.07-**7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
**8.07-**8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
**11.30**-11.50 Вести-Чăваш ен
**14.30**-14.50 Вести-Чувашия
**16.30**-16.50 Вести-Чăваш ен
**20.30**-20.50 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА
**6.30** «Евроньюс»
**10.00**, 15.30, 19.30, 23.30 Новости культуры
**10.15**, 19.45 Главная роль
**10.40 «ПУТЕВКА В ЖИЗНЬ»**
**12.30** «Соавтор - жизнь. Борис Полевой».
**12.55** Д «Запретный город Китая»
**13.50** Легенды Царского Села
**14.20 «РОССИЯ МОЛОДАЯ»**
**15.40** М «Волшебник Изумрудного города»
**16.00** М «В порту». «Катерок»
**16.35** Тс «ДЕВОЧКА ИЗ ОКЕАНА»
**17.00** Д «Страсти по насекомым»
**17.25** «Конкурс Чайковского. Золотые страницы». Виолончелисты
**18.25** Д «Харун-аль-Рашид»
**18.35** Д «Тумаи - прачеловек из Чада»
**20.05** «Абсолютный слух»
**20.45**, 1.55 Academia
**21.30** Генералы в штатском. Иван Лихачев.
**22.00**, 2.40 Д «Мировые сокровища культуры»
**22.15** Магия кино
**23.00** «Исторические путешествия Ивана Толстого»
**23.50 «ПАЦАНЫ»**
**1.25** Симфонические фрагменты и хоры из опер Дж. Верди

### НТВ
**4.55** «НТВ утром»
**8.30** И снова здравствуйте!
**9.30**, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
**10.00**, 13.00, 16.00, 19.00, 23.15 Сегодня
**10.20** «Живут же люди!»
**10.55**, 3.25 «До суда»
**12.00**, 2.20 Суд присяжных
**13.25** «Прокурорская проверка»
**14.40** «Давайте мириться!»
**16.30** Тс «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА»
**19.30** Тс «ЛИТЕЙНЫЙ»
**21.30** Тс «МОСКВА. ЦЕНТРАЛЬНЫЙ ОКРУГ»
**23.35** Д «Настоящий итальянец». «Красота по-итальянски»
**0.25** Квартирный вопрос
**1.30** Тс «БЕЗ СЛЕДА»
**4.20** Особо опасен!

### ТНТ
**6.00** Д «Необъяснимо, но факт». «Привороты»
**7.00**, 7.25 М «Эй, Арнольд!»
**7.55**, 12.30, 13.00, 13.30 М «Приключения Джимми Нейтрона, мальчика-гения»
**8.30**, 8.55 М «Тасманский дьявол»
**9.25**, 10.00 Тс «УНИВЕР»
**11.40** М «Лунатики»
**12.00** М «Том и Джерри-2»
**14.30** «Дом-2. Live»
**16.20 «НУ ОЧЕНЬ СТРАШНОЕ КИНО»**
**18.00**, 20.00 Тс «ИНТЕРНЫ»
**18.30**, 20.30 Тс «ЗАЙЦЕВ + 1»
**19.00** Тс «РЕАЛЬНЫЕ ПАЦАНЫ»
**19.30** Тс «СЧАСТЛИВЫ ВМЕСТЕ»
**21.00 «ОЧЕНЬ СТРАШНОЕ КИНО-2»**
**22.20**, 1.00 «Комеди Клаб»
**23.00**, 4.45 «Дом-2. Город любви»
**0.00** «Дом-2. После заката»
**0.30** «Секс» с Анфисой Чеховой
**1.55**, 2.25 Тс «ДРУЗЬЯ»
**2.55 «НА РАЗРЫВ»**
**5.45** «Комедианты»

### ТВЦ
**6.00** «Настроение»
**8.25 «К ЧЕРНОМУ МОРЮ»**
**9.50 «СЛЕД В ОКЕАНЕ»**
**11.30**, 14.30, 17.30, 19.50, 20.30 События
**11.45 «ДОЧЕНЬКА МОЯ»**
**13.40** «Pro жизнь»
**14.45** Деловая Москва
**15.10**, 17.50 Петровка, 38
**15.30** Тс «СЫЩИКИ РАЙОННОГО МАСШТАБА-2»
**16.30** «Врачи»
**18.15** М «Мы с Джеком»
**18.25 «И СНОВА АНИСКИН»**
**19.55** «Прогнозы»
**21.00 «ОНА СКАЗАЛА «ДА»**
**22.55** «ТВ Цех»
**23.45** События. 25-й час
**0.20 «МАФИЯ БЕССМЕРТНА»**
**2.05 «КОЛЬЕ ДЛЯ СНЕЖНОЙ БАБЫ»**
**3.55** Д «Степан Бандера. Рассекреченная жизнь»
**5.25** «Звезды московского спорта»

### СТС
**6.00** Тс «КАК Я ВСТРЕТИЛ ВАШУ МАМУ»
**6.55** М «Смешарики»
**7.00** М «Приключения мультяшек»
**7.30** М «Приключения Вуди и его друзей»
**8.00** Тс «СВЕТОФОР»
**8.30** Тс «ДАЕШЬ МОЛОДЕЖЬ!»
**9.00**, 20.00 Тс «ВОРОНИНЫ»
**9.30, 21.00 «МЕТОД ЛАВРОВОЙ»**
**10.30**, 18.30, 19.00 «Ералаш»
**13.30** М «Настоящие охотники за привидениями»
**14.00** М «Соник Икс»
**14.30** М «Пинки и Брейн»
**15.00** М «Что новенького, Скуби Ду?»
**15.30**, 19.30 Тс «ПАПИНЫ ДОЧКИ»
**17.30** «Галилео»
**22.00 «ДРЯННЫЕ ДЕВЧОНКИ»**
**23.50** Тс «6 КАДРОВ»
**0.00** Шоу «Уральских пельменей»
**0.30** Дневник фестиваля «Кинотавр»
**1.00** Тс «ТЕОРИЯ БОЛЬШОГО ВЗРЫВА»
**1.30 «ЗВЕРЬ»**
**3.15 «ПОЦЕЛУЙ МУМИИ»**
**5.05** Тс «ХАННА МОНТАНА»

## ИЮНЬ 9 четверг кĕçнерни кун

### ПЕРВЫЙ
**5.00**, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.30, 3.00 Новости
**5.05** «Доброе утро»
**9.20** «Контрольная закупка»
**9.50** «Жить здорово!»
**11.00** «ЖКХ»
**12.20** «Модный приговор»
**13.20** «Детективы»
**14.00** Другие новости
**14.20** «Понять. Простить»
**15.20**, 4.20 «Хочу знать»
**15.50** Тс «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
**16.50** «Федеральный судья»
**18.15** «След»
**18.55** «Давай поженимся!»
**19.55** «Пусть говорят»
**21.00** «Время»
**21.30** Тс «ГРУППА СЧАСТЬЯ»
**22.30** «Человек и закон»
**23.50** «Rolling Stones» в изгнании»
**1.10, 3.05 «КОНТРОЛЬ»**
**3.30** Тс «СПАСИТЕ ГРЕЙС»

### РОССИЯ 1
**5.00** Утро России
**9.05** «С новым домом!»
**10.00** «О самом главном»
**11.00**, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
**11.50**, 3.50 «Тунгусское нашествие. 100 лет»
**12.50** «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
**14.50**, 4.45 Вести. Дежурная часть
**15.05** Тс «ЕФРОСИНЬЯ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
**16.50** Тс «ВСЕ К ЛУЧШЕМУ»
**17.55** Тс «ИНСТИТУТ БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
**18.55** «Прямой эфир»
**20.50** Спокойной ночи, малыши!
**21.00** Тс «БУМЕРАНГ ИЗ ПРОШЛОГО»
**22.50** «Поединок»
**23.50** Вести +
**0.10** «Вкус победы. Сергей Павлов»
**1.00** «Профилактика»
**2.15** «Честный детектив»
**2.45** Горячая десятка

### ЧУВАШИЯ
**6.07-**6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
**7.07-**7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
**8.07-**8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
**9.05** Мир искусства. Народный артист России Юрий Васильев
**9.30-**10.00 Секреты здоровья и крастоы
**11.30**-11.50 Вести-Чăваш ен
**14.30**-14.50 Вести-Чувашия
**16.30**-16.50 Вести-Чăваш ен
**20.30**-20.50 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА
**6.30** «Евроньюс»
**10.00**, 15.30, 19.30, 23.30 Новости культуры
**10.15**, 19.45 Главная роль
**10.40 «ПАЦАНЫ»**
**12.15** «Планета Михаила Аникушина»
**12.55** Д «Тумаи - прачеловек из Чада»
**13.45** «Век Русского музея»
**14.15 «РОССИЯ МОЛОДАЯ»**
**15.40** М «Волшебник Изумрудного города»
**16.15** М «Волк и теленок». «Теремок»
**16.30** Тс «ДЕВОЧКА ИЗ ОКЕАНА»
**16.55** Д «Дикая планета». «Рысь: воспитание хищника»
**17.25** «Конкурс Чайковского. Золотые страницы»
**18.25** Д «Поль Сезанн»
**18.35** Д «На плотах к острову Пасхи. Одиссея принца инков»
**20.05** Черные дыры. Белые пятна.
**20.45**, 1.55 Academia
**21.30** «Евгения Ханаева. Под звуки нестареющего вальса».
**22.15** «Культурная революция»
**23.00** «Исторические путешествия Ивана Толстого»
**23.55 «ДОРОГАЯ ЕЛЕНА СЕРГЕЕВНА»**
**1.25** «Несерьезные вариации»
**2.40** «Pro memoria». «Танец»

# ТВ Эрне

ТЕЛЕСЕРИАЛ
**ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ ФИЛЬМ**
**ДОКУМЕНТАЛЬНЫЙ ФИЛЬМ**
Мультфильм

## пятница июнь 10 эрне кун

### НТВ
**4.55** «НТВ утром»
**8.30** «Развод по-русски»
**9.30,** 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
**10.00**, 13.00, 16.00, 19.00, 23.15 Сегодня
**10.20** «Внимание: розыск!»
**10.55**, 3.15 «До суда»
**12.00**, 2.15 Суд присяжных
**13.25** «Прокурорская проверка»
**14.40** «Давайте мириться!»
**16.30** «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА»
**19.30** «ЛИТЕЙНЫЙ»
**21.30** «МОСКВА. ЦЕНТРАЛЬНЫЙ ОКРУГ»
**23.35** «Женский взгляд»
**0.15** Дачный ответ
**1.20** «БЕЗ СЛЕДА»
**4.15** Особо опасен!

